*ВИҪҪĔМĔШ ҪУЛ ТУХАЙ.*

*Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

Уйăхра пĕрре тухать.
ХАКĔ:
пĕр уйăха — 20 п.
3 уйăха — 60 п.
6 уйăха 1 т. 20 п.
1 ҫула 2 тенкĕ
Ретакси атресĕ:
Чебоксары, Канашская ул.
дом Совдепа № 15.
Телефон № 47.

# СУНТАЛ

Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен „Канаш“ сойусĕн литтераттурă, криттĕк, политтĕк тата наукă шурналĕ

„КАНАШ“ ХАҪАТ ҪУМĔНЂЕ ТУХАТЬ.

№ 2 (32)
ФЕВРАЉ
1927 ҪУЛ.

# В. И. ЛЕНИН
## ФЕВРАЉ УЙăХĔНЂИ РЕВОЉУТСИ ҪИНЂЕН.

### Умĕнхи сăмах.

Кунта В. И. Ленинăн Февраљ уйăхĕнђи револјутси пулсанах ҫырнă „Инҫетрен йанă ҫыру“ йатла статйине кĕскетсе куҫарнă. Кунта Ленин акă ҫак ыйтусем ҫинђен калать: 1) Револјутси мĕнле сăлтавсем пирки пуҫланса кайни ҫинђен; 2) Мĕнле классем, мĕнле тĕлсемшĕн револјутсийе хутшăнса кайни ҫинђен (классен февраљ револјутсинђи хирĕҫӳсем); 3) Вăхăтлăх Правиттĕлствăн пуршуаллă характĕрĕ ҫинђен; 4) Пролеттариатăн ҫакăн пирки пулнă сатађĕсем ҫинђен; 5) Пролеттариатăн ҫак револјутсири сойуснĕкĕсем ҫинђен.

Револјутси ҫывхарнине Влатимĕр Илйиђ вăрçă вăхăтĕнђех, 1915 ҫултах сиссе тăнă, ҫитес револјутсин ђи малтан тумалли ĕҫĕсене кăтартса панă. Вăл вĕрентнĕ тăрăх, 1905 ҫулхи револјутсирен виҫĕ ђи пысăк ĕҫ тумасăр йулнă. Вĕсем: 1) помещĕксен ҫĕрне туртса илсе, ăна хресђенсене парасси; 2) темократтиллĕ респуплĕк тăвасси; 3) 8 сехетлĕ ĕҫ кунĕ тăвасси. Кусемсĕр пуҫне ҫитес револјутсин никама кирлĕ мар вăрҫа ђармалла пулнă. Ҫитес револјутси 1905 ҫулхи револјутси пек пулма пултарайман. Вăрҫă пирки хуҫайствă калама ҫук йухăнни, вăрҫăра тăшман патша ҫарне йалананах ҫĕнтерсе пыни, выҫăпа аптăра пуҫлани, — халăхăн револјутсиллĕ вăйне темиҫе хут вăйлăлантарса тăнă. Ҫавăнпа та Питĕрти ĕҫлекенсем 1917 ҫулăн март уйăхĕнђе (киввипе февраљ уйăхĕнђе) урамсене тухса, ҫĕрĕк тымарла патша йĕркине ҫĕмĕрсе тăкнă.

Револјутси ҫăмал ҫеҫ ҫĕнтернипе пĕтĕм халăх калама ҫук саваннă. Ҫав вăхăтрах кăпиталҫăсем пĕтĕм влаҫа хăйсен аллине илнĕ.

Пролеттариатпа хресђенсем влаҫа хăйсен аллине илес тесен мĕнле ҫулпа пымаллине Влатимĕр Илйиђ питĕ аван, питĕ уҫă курса тăнă. Анђах ун ҫинђен малтан ĕҫлекенсемпе хресђенсене тĕплĕн каласа ăнлантармалла, вĕсен пуҫĕсенђен эссерсемпе меншевиксен сĕрĕмне сирсе йамалла пулнă. Влаҫа пуршуаҫи аллине паракан Февраљ револјутсинђен пуҫласа, пуршуаҫине ҫĕмĕрсе тăкакан Октăпĕрти револјутсиђђен — ҫав ĕҫе тумашкăн пĕр канмасăр ĕҫленĕ.

Пуршуаҫи влаҫа хăй ирĕккĕн парас ҫуккине пурте аван курса тăнă. Ҫавна кура, В. И. Ленин пĕр канмасăр ҫапăҫу пуҫлас ĕҫе хатĕрленĕ. Ĕҫĕн планне вăл тĕпĕ йĕрĕпе, вак-тĕвек ĕҫсене те манмасăр, кăтартса,васкатса пынă. Вăл ҫапла вĕрентсе пынипе, 1917 ҫ. нойапĕрĕн 7-мĕшĕнђе (киввипе Октăпĕрĕн 25-мĕшĕнђе) Питĕрти ĕҫлекенсемпе салтаксем Вăхăтлăх Правитĕлствăна ҫĕмĕрсе тăкнă. Тĕнђере халђђен пулман патшалăх, ĕҫҫынни патшхлăхĕ ҫапла пуҫланса кайнă.

В. И. Ленин ҫав вăхăтра ҫырнă статйасене вуласа, револјутси ĕҫĕ мĕнле пулнине курса, халĕ те хĕвеланăҫĕнђи ĕҫлекенсемпе хĕвелтухăҫĕнђи пусмăр айĕнђи халăхсем револјутси ĕҫне тума вĕренмелле.

**Н. В.**

# ИНҪЕТРЕН ЙАНă ҪЫРУ.

Пĕтĕм тĕнђери империалисамла вăрçăран ҫуралнă пирвайхи револјутси пуҫланса кайрĕ. Ку пирвайхи револјутси, кирек мĕнле пулсан та, йулашки револјутси пулас ҫук.

Ҫак сăмахсене ҫыракан патне, Швейтсарине, ҫитнĕ хыпарсем тăрăх, 1917 ҫ. мартăн 1-мĕшĕнђи вырăссен пĕрремĕш револјутсийĕн малтанхи пайĕ туса пĕтнĕ ĕнтĕ. Ку малтанхи утăм — йулашки утăм пулас ҫук.

Мĕнлехи ҫакăн пек тĕлĕнмелле ĕҫ пулса тăђĕши? Ĕмĕртенпе тытăнса тăракан, 1905 — 1907 ҫулсенђе пĕтĕм халăх ушкăнĕпе ҫапăҫнă вăхăтра тытăнса йулнă патша йĕркийĕ мĕнлехи 8 кун хушшинђе ишĕлсе анђĕ пулĕ?

Тĕнђере, историре тĕлĕнмелле ĕҫсемех ҫук, анђах истори ҫулĕ сасартăк улшăннă вăхăтри, кирек мĕнле револјутсисем вăхăтĕнђи ĕҫсем ахаљ ҫын куҫне питĕ тĕлĕнмелле ĕҫсем пек курăнмалла, мĕншĕн тесен револјутси вăхăтĕнђи ҫапăҫура вăйсем питĕ тĕлĕнмелле пăтранса-улшăнса, кĕтме ҫук майсемпе ҫыхăнса пырăҫҫĕ.

Патша йĕрки пилĕк-ултă кун хушшинђе ишĕлсе анмашкăн темиҫе тĕрлĕ, питĕ пысăк условисем пĕрпĕринпе ҫыхланса, пухăнса пымалла пулнă. Ҫав условисенђен ђи паллăраххисене кăтартар.

1905 — 1907 виҫĕ ҫул хушшинђе классен калама ҫук хăватлă ҫапăҫăвĕсем пулман пулсан, вырăс пролеттариађĕн револјутсиллĕ вăйхăваđĕ пулман пулсан, — ҫак иккĕмĕш револјутсин малтанхи пайне те ҫавăн пекех хăвăрт туса пĕтереймен пулĕђђĕ. Пирвайхи (1905 ҫ.) револјутси ĕмĕрхи йурăхсăр йаласене тĕпĕ йĕрĕпе тăпалтарса кăларса, вырăн тасатрĕ, темиҫе мелйун ĕҫлекен, темиҫе вуншар мĕлйун хресђен ҫыннине вăл политтĕк ĕҫĕпе паллаштарђĕ, ҫапăҫу ĕҫĕпе ҫыхлантарђĕ, вырăс халăхĕ хушшинђи классене (политтĕк парттисене те)

пӗрпӗрин умне (пӗтӗм тенђе умне) кӑларса тӑратрӗ, вӗсен ӗçӗсене, вӗсен инттересӗсене вӗсен малалли шухашӗсене тӗрӗссипе кӑтартса пађӗ. Пирвайхи ревоԓутси, тата ун хыççӑн пулнӑ контр-ревоԓутси вӑхӑђӗ (1907—1914 ç. ç.) патша йӗркийӗн аштиккине тӗпӗ йӗрӗпе тавӑрса, унӑн ирсӗрлӗхне, машкаллӑхне, аскӑнлӑхне ним йулми тарӑнђђӑнех уçса кӑтартрӗç. Патшалӑха тытса таракан варахурахсен ушкӑнне, ирсӗртен ирсӗр Распутӗнран пуçласа, пӗтӗм Раççейе йеврейсен, ӗçлекенсен, ревоԓутсионерсен йунӗпе варалакан хурӑхсене çитиђђен, çака ревоԓутси кӑтартса пађӗ: темиçе мӗлйун теçеттин çӗр хайсен аллине йарса илнӗ „ҫелӑ помӗшђӗксен“ усал ӗçӗсене, тискӗрлӗхӗсене, хайсен „таса харпарлахӗшӗн“ никама хӗрхенмесӗр хӑтланакансене кӑтартрӗ.

1905—1907 çулхи ревоԓутси пулман пулсан, 1907—1914 ç. ç. контр-ревоԓутси пулман пулсан, — çак февраԓ-мартри ревоԓутсийӗн сакӑр кунӗ хушшинђе вырас халахӗн. вырас патшалахӗнђи халӑхсен класӗсем хайсен патша йеркине çӗмӗрнӗ ђухнехи ӗçӗсене çав тери лайах пӗлсе çитмен пулӗђђӗç. Çак сакӑр кунта пулса тана ревоԓутси, ӑна пуçлађђен малтан, вӗренмелле, вунвуник ревоԓутси туса пахнапа пӗрех пулса таҫӗ. Ӑна тавакансем пӗрпӗрне, хайсен ӗçӗсене, выранӗсене, таврари йапаласене витӗрвитӗрех пӗлсе тана, политтӗк тӗлӗшӗнђен кӑшт та пулин паллӑрах шухашсене, ӗçсене курса тана.



**„Ленин тупӑкра“**—Йурий Сайтсӗв ђулсенђен туна карттин.

Анђах 1905 çулхи пирвайхи мухтавлӑ ревоԓутси... 12 çул иртсен... 1917 çулхи ревоԓутси патне илсе çитермешкӗн, паçӑр каланисӗр пуçне тата хаватлӑ, вайлӑ, мухтавлӑ „решиççор*)“ кирлӗ пулнӑ. Вӑл анђах пӗр йенђен, тӗнђе историне калама çук хавӑрт васкатса йама, тепӗр йенђен пӗтӗм тӗнђипе халђђен курман криçӗссем (политтӗкла, экономӗкла, натсионалла, интернатсионалла криçӗссем) пуçласа йама пултарнӑ. Пӗтӗм тӗнђе историне калама çук хаварт васкатса йанинђен пуçне, вӑл историйӗн куккӑр-маккарӗсем кирлӗ пулнӑ, мӗншӗн тесен çав куккӑр-маккӑрсенђе анђах Романовсен йунлӑ, пылђаклӑ йӗрки хавӑрт ишӗлсе анма пултарнӑ.

Çавӑн пек хӑватлӑ „решиççор“, историне вӑйлӑн васкатса пыраканӗ—вӑл тӗнђери империалисамлӑ вӑрçӑ... Ку вӑрçӑ, кирек хӑш йенђен пахсан та, хайне хайех, классен çапаçуне васкатса, çивђӗлетсе, пролеттариата пуршуаçине хирӗç тӑратса, классен хушшинђи краштан вӑрçи пулса каймалла пулнӑ.

Çапла пулса кайас ӗçе 1917 çулхи февраԓ-мартри ревоԓутси пуçласа паҫӗ.

Çаванпа та Раççейре ревоԓутси пуринђен малтан пуçланса кайнинђен тӗлӗнмелли çук, мӗншӗн тесен Раççейри хирӗçӳсем тавçарса илме çук пысак пулнӑ, пролеттариат (араснах аван пулнаран мар, 1905 çулхи ӗçсен тымарӗсем ђӗрӗ пулнаран) пуринђен те ытла ревоԓутси майлӑ пулнӑ. Ревоԓутси криçӗсӗ тата Раççейпе ун майлӑ патшалӑхсене темиçе хут пире йавӑррӑн çӗмӗрнӗрен пушшех хавӑрт çитнӗ. Çав темиçе хут çӗмӗрнӗ пирки кивӗ правиттӗлства йӗрки пӗтӗмпе хавшаса пӗтнӗ, ана хирӗç халӑхан пур класӗсем те çилленсе çитнӗ, çарти халӑх пӗтӗмпех тискерленсе кайнӑ; çаван пиркийех çарӑн творенсемпе ђиновниксен майла пуçлӑхсем пӗтӗмӗшпе пекех вилсе пӗтнӗ, вӗсен выранне çӗнӗ пуçлӑхсем, пуринђен ытла пуршуаçи, вак пуршуаçи майлӑ пуçлӑхсем пулса тана.

Вӑрçара тӑ имансем çӗнтерсе пыни патша йӗрки ишӗлсе анас ӗçе васкатнӑ пулсан — Анкли-Франтси финанс капиталӗпе. Анкли-Франтси империалисӑмӗпе Раççейри октӑприс-катетсен капиталӗ пӗрлешни вал криçӗсе васкатакан вӑй пулса тана...

Анклипе Франтси поссолӗсем хайсен акӗнђӗсем урла, хайсен майлисем урла, такçанах, мӗнпур вай çитнӗ таран, Микулай патшапа Вилкелӗм патша вӑрттан килӗшӳ тавас ӗçе хирӗç тӑрса пынӑ; вӗсемех Микулай патшана сирпӗтес ӗçре тӗ ђылай тарӑшна. Ку ӗç февраԓ-мартри ревоԓутси йепле пулса пынинђен питӗ аван курӑнса тараť.

Илемлӗ шухӑшсемпе хамӑра хамар ултаlap мар...

Çийелтен, тулашӗнђен çӑмаллан пӑхсан, ревоԓутси калама çук хӑвӑрт, пӗтӗмпех, тӗпӗ йӗрӗпех çӗнтерсе тухнӑ теме пулаť. Анђах унпек ђас çӗнтерни вӑл ку ӗçре—истори тӗлӗшӗнђен ӗçсем питӗ тӗлӗнмелле çыхӑнса пынӑ пирки—темиçе тӗрлӗ йухӑмсем, пӗтӗмпех ӑрасна класла инттерессем, политтӗк тӗлӗшӗнђен пӗтӗмпех хирехирӗç шухӑшсем пӗрлешсе—питӗ «килӗшӳллӗ» пӗрлешсе—танӑ|ан пулни курӑнаť. Акӑ: империалисамлӑ вӑрçа малалла татах вайлалантарса йарассишӗн, Раççейри ӗçлекенсемпе хресђенсене тата темиçе мӗлйун çын вӗлерсе пӗтерессишӗн тӑрӑшакан Анкли-Франтси империалисӗсемпе Миԓукkovан, Куђкован т. ы. пӗрлешӗвӗ; Констагинопӑле Куђковсене... Çири çӗрне франтсуссене... Мессопоттами çӗрне Анкли капиталçисен аллине пама туна килӗшӳ—ку пӗр йенђен. Тепӗр йенђен—пӗтӗм халах, пӗтӗм пролеттариат, пӗтӗм йалти, хулари ђухансем ревоԓутсиллӗ пӗрлешсе çакӑршӑн, килӗшӳ тавассишӗн, ђан ирӗклӗхшӗн тӑрӑшни.

..Питӗрти ӗçлекенсемпе салтаксем (Пӗтӗм Раççейри салтаксемпе ӗçлекенсем те çавах) ним хӑрамасӑр патша йӗркине хирӗç, империалисӑмла вӑрçа хирӗç, ирӗклӗхшӗн, хресђенсем ваԓђи çӗршӗн, килӗшӳ тӑвассишӗн çапаçнӑ. Анклипе Франтсин империалисӑмлӑ капиталӗ, вӑрçа малашне вайлалантарса пырас тесе, патша йӗритавра тӗрлӗ хирӗçӳсем, усал канашсем туса хатланнӑ, Куђковсемпе Миԓукковсене тӗккелесе, илӗртсе, шантарса пынӑ, малтанах çӗнӗ правиттӗлства хатӗрлесе тана. Çаванпа та, пролеттариат çапаçура çӗмӗрме пуçласанах, вӑл хатӗр правиттӗлствӑ влаçа хай аллине çаварса илнӗ.

Ку правиттӗлствӑ — тӗллӗн-паллӑн, кӗтмен çӗртен пуханна çынсем мар. Вӗсем — капиталисӑмла помеш-

*) Решиççор—театӑрта выђакан арттиссене кӑтартса пыракан.

ҫӗксемпе пуршуаҫи класӗн... претставиттӗлӗсем... Ку правитӗлствӑ, хаҫхи в ӑ р ҫ ӑ т ӗ л ӗ ш ӗ н ҫ е н пӑхсан, миллиартлӑ «хуҫасен» - Анклипе Франтсин—тарҫи анҫах.

Ҫакӑ правиттӗлствӑпа йунашар ҫӗнӗ, саккунпа ҫирӗплетмен, ушкӑнӗпех сарӑлса ҫитмен, ҫылай вӑйсӑр, ӗ ҫ л е к е н с е н п р а в и т т ӗ л с т в и пулса тӑнӑ. Вӑл пролеттариатпа пӗтӗм йалтипе хулари ҫухӑн халӑхӑн инттересӗсемшӗн тӑраҫ. Вӑл—Ӗ ҫ л е к е н с е м п е С а л т а к с е н Т е п п у т т а ҫ ӗ с е н П и т ӗ р и С о в е ҫ ӗ. Политтӗк ӗҫӗсен йӗрки - майӗсем ҫ ӑ н ҫ ӑ н н и п е ҫавӑн пек.

Маркҫисӑмла тактӗккӑна пӗртен пӗр тӗреклӗ никӗс ҫинҫе,—фактӑсен никӗсӗ ҫинҫе,— туса пырас тесессӗн, пуринҫен малтан ҫав йӗрке-майсене мӗн май килнӗ таран тӗрӗс пӗлсе тӑма тӑрашмалла. Патша монархийӗ ҫӗмӗрӗлнӗ, анҫах ҫӗмӗрӗлсех пӗт ймен.

Хайӗн влаҫне алран йарас мар тесе, империалисӑмлӑ вӑрҫа татах ҫӑсас тесе халӑха и р ӗ к с ӗ р е х, к а м ӑ л с ӑ р а х м а к ҫ и м у м ҫӑмӑллӑхсем, ирӗклӗхсем пама пулакан окҭаприс-катетсен пуршуа правиттӗлстви,— ҫӑннипе «Анкли тата Франтси» йатлӑ хуҫасен прикашҫӑкӗ.

Пӗтӗм халӑхӑн ҫ и ҫ у х ӑ н массин инттересӗсене, урӑхла каласан — халӑхӑн $^9/_{10}$ пайӗн инттересӗсене сыхлакан, к и л ӗ ш у ш ӗ н, ҫ а к ӑ р ш ӑ н, и р ӗ к л ӗ х ш ӗ н ҫапӑҫакан Ӗҫлекенсемпе Салтаксен Теппуттаҫӗсен Совеҫӗ — ӗҫҫынни правиттӗлствин пурӑнӑҫ тӗвви.

Хаҫхи политтӗк йӗрки-майӗсем, револютсин пӗрремӗш утӑмӗпе иккӗмӗш утӑм хушшинҫи йӗркесем, ҫака виҫӗ вӑй кӗрешӗвӗнҫен килеҫҫӗ.

...Катетсемпе окҭаприссен, Куҫковсемпе Милюкковсен правиттӗлстви,— хӑйсен вӗсен камалӗ пулсан та — ни к и л ӗ ш у, ни ҫ а к ӑ р, ни и р ӗ к л ӗ х пама п у л т а р а й м а с ҭ.

Килӗшу — мӗншӗн тесен вӑл вӑрҫӑ правиттӗлстви, империалисӑмлӑ йунтакак правиттӗлстви, йут ҫӗрсене и л м е к а р м а ш а к а н правиттӗлствӑ, ку таранҫӗн Арменине, Калитсине, Туртсине, Константтинопӑлҫа туртса илес, Поҫшшӑна, Курҫантине, Литва ҫӗрне т. ыт. ҫӗмӗрсе илес тенӗ патша политтӗкӗнҫен пӗр сӑмахпа та писӗнмен правиттӗлствӑ. Ку правиттӗлствӑн алури пӗтӗмпех Анкли-Франтсин империалисӑмлӑ капиталӗпе сыхӑнса тӑраҭ. Вырӑс каппиттлӗ вӑл — ҫ ӗ р ш е р м и л й а р т тенкӗ тыткалакан хуҫасен, «Анкли тата Франтси» йатлӑ хуҫасен, пӗр пайӗ анҫах.

Ҫ ӑ к ӑ р — мӗншӗн тесен ку правиттӗлствӑ — пуршуалла правиттӗлствӑ... Ҫакӑр пур иккенне, анҫах ӑна алла илес тесен к а п и т а л п а ҫ ӗ р х у ҫ и с е н т а с а л ӑ х н е п у ҫ ҫ а п м а к и р л ӗ м а р иккенне халӑх пӗлӗ, ҫасах пӗлсе ҫитӗ.

Ирӗклӗх — мӗншӗн тесен ку правиттӗлствӑ помешҫексемпе капиталҫӑсен, халӑхран хӑракан правиттӗлствӑ.

Ку правиттӗлствӑпа мӗн тӑвас ӗҫри хамӑрӑн тактӗккӑн умри сатаҫисем ҫинҫен тепӗр статйара калаҫапӑр. Ун ҫух епӗр хаҫхи вӑхӑтӑн, револютсин пӗрремӗш утӑмӗпе иккӗмӗш утӑмӗ хушшинҫи вӑхӑтӑн, уйрӑм паллисене кӑтартапӑр. Ӗ ҫ л е к е н с е м, есӗр п а т ш а й ӗ р к и н е х и р ӗ ҫ к р а ш т ӑ н в ӑ р ҫ и т у н ӑ ҫ у х х а л ӑ х ӑ н, п р о л е т т а р и а т ӑ н т ӗ л ӗ н м е л л е п а т т ӑ р л ӑ х н е к ӑ т а р т ӑ р, р е в о л ю т с и н и к к ӗ м ӗ ш у т ӑ м ӗ н ҫ и х ӑ в ӑ р ҫ ӗ н т е р е с ӗ ҫ е х а т ӗ р л е м е ш к ӗ н с и р ӗ н п р о л е т т а р и й ӗ н, п ӗ т ӗ м х а л а х ӑ н о р к а н и с а т с и х ӑ в а т н е к ӑ т а р т м а л л а. Ҫак лосӑнк мӗншӗн хаҫхи вӑхӑтра „пайанхи кун“ сатаҫи пулма кирлине епӗр кӑтартапӑр.

[В. И. Ленин. XIV т. I п. 5-13 стр.]

# Ҫ и л.

Ҫил сиксех ташлаҭ йӗтемсем ҫинҫе.
Пуҫахсем вӗҫеҫҫӗ. Сирпӗнет тырри.
Ухлатсах сикет сарӑмри кӗлте
Шарт - шарт! — ал ҫупаҭ йуман тапаҫи.

„Кӗҫвӗҫ ҫитет... Ҫитрӗ ӗнтӗ,
Ҫитрӗ, ҫитрех кӗркунне!..
Ҫаштик, ҫаштӑк ӑсаҫҫӗ те, сапаҫҫӗ:
—„Ҫилӗ лайах!..“ Саварӑҫ тыр кашӑҫне...

Шӑхӑраҭ савни, вӑй выҫаҭ сив ҫил, —
Тулхӑрса ҫупаҭ лӑш курма пӗлми.
Уншӑн йал, йе уй — пур ҫӗрте те кил.
Тӳпери тем ҫулӗ кӑнкӑвак кипки.

Авӑ пӗлӗт шӑваҭ, васкасах шӑваҭ.
Унӑн хушшинҫех пек ҫилӗ-кайакӗ вӗҫет;
Шатах кипкеленҫӗҫ, аҫамланҫӗҫ шат,
Хӑхлесе тӑсайрӗҫӗ кӗрхи кӗввине.

Ерешмен картисем вӗҫеҫ ӑш йенне,
Йуласах килместтӗр хуркайӑксенҫен;
Карталанҫӗҫӗ куракӗ-ҫанисем —
Выҫав кӑтартасшӑн пуҫ тухса кайаҫҫен.

Ухлатса илҫӗ ҫил. Пушанҫӗҫӗ йӗтемсем,
Пурара виҫӗнҫӗ хресҫенӗн пурлӑхӗ.
Пасланса пиҫрӗҫӗ авӑн йашкисем.
Ҫитсе те пеҫӗ окҭапӗр уйахӗ.

* * *

Слыхали-ль Вы, как дик и строг
Октябрьский ветер трубит в рог?!.
**Верхарн.**

Окҭапӗрти ҫил, хайарланнӑ ҫил!
Таках туллашаҭ вӑл, таках ҫӗмӗрлет.
О к ҭ а п ӗ р тесессӗнех — ӗнтӗ урӑх ҫан—
Тапранаҭ ҫӗремҫӗм, ӗмӗт ҫӗкленет.
Окҭапӗр — ҫикнал хаҫ, ҫӗнтерӳ йалавӗ!
Сив ҫилӗ ҫӗнет те — тӳтпе кашкӑртаҭ:
— Сыхланӑр! Пӗтменха пролеттар тӑшманӗ,
Ан манӑр,манас ҫук Смоҫнайри штапа!*)
Манманҫке! Манас ҫук! Сив ҫил мантармасҭ.
Асӑмрах тӑраҫҫӗ Окҭапӗр кунӗсем!
Паррикатӑсем!.. Тупӑ кӑрнтлатаҭ!
Ӗҫ ҫынне сутасшӑн темократ пупсем!
Йанраса йаҫӗҫӗ хапрӑк-савӑтсем.
Илсе кайрӗ ҫил таҫтах сассене.
— Тытӑр хӗҫпӑшал! Тиктаттура!..
Хӳтӗленҫӗ ӗҫ. Совеҭ Раҫҫейӗ!
Сив ҫилех йурлаҭ Хӗрлӗ Ҫар ҫинҫен,
Тӑвал кунсене асӑмра усраҭ:
Колҫакпа ҫехсем, выҫлӑхсем мӗнсем
Мӗн пурне ҫӗнтернӗ. Сив ҫил ҫеҫ ҫупаҭ.

**Шаланкӑ.**

*) Смоҫнай институҫӗ Питӗрте. Окҭапӗр кунӗсенҫе унта револютсиллӗ ҫарсен штапӗ тӑнӑ.

**В. Рсай.**

# АСЛАТИ УМĔН.

*(Поемă).*

I.

Пайан Мишук ытла та пит хурланнă,
Пайан Мишук larат̆ ђавсаланса;
Шур çÿçĕсем çамки çине ун аннă,
Йăваш куçсем йĕпеннĕ ђаралса.

Пайан Мишук йăш ывăлне ăсатнă,
Йăш ывăлне ăсатнă салтака.
Ун çемйинђен татах пĕр çынна катнă,
Мĕн пурĕ виççĕн кайрĕç тамăка...

Килкартинђи сарай ишĕлсе аннă,
Çĕрĕк вите шăхрат̆ шăтăксенђен,
Тур лашине салтаксем илсе кайнă,
Пуш капансем анђах итемĕнђе.

Тĕнђе вăрçи ăна пăхмаст̆, вăл урнă,
Тавай ăна лаша, тавай çăкăр.
Тĕнђе сăнне хĕвел пит лайăх курнă,
Таса йунпа хĕрелнĕ ун кăкăр.

Мишук пиђђен асли, Йăван, ак вилнĕ,
Мишук Йăванĕ вилнĕ çапăçса;
Хыт çапăçса „Керки хреçне" те илнĕ,
Патшашăнăх вăл вилнĕ йун хăсса...

Вăтам Мишша ăçта? Ăна пĕлмеççĕ,
Çултолăк ак хыпарсăр вăл пурнат̆.
Хыпарсăрах нумайĕшĕ пĕтеççĕ,
Кам айăплă? Çанталăк пит урат̆...

Кĕçни, Ваçлей, вăл сара, питĕ çамрăк,
Вунсаккăр çеç тултарнă раштавра:
Сăмаварта çунат̆ ав хура кăмрăк,
Ваçлей, Ваçлей, пĕтет çапăçурах...

Ах мĕн курас? Ман пек нуша кам курнă?
Ах, тура, ес мĕнма çийен мана?
Мĕн тунă еп? Кам такине еп пуснă?
Хăçан, хăçан еп варçнă-ха сана?..

Çапла калат̆ Мишук пиђђе. Шуралнă,
Татах шуралнă вăл çак кунсенђе.
Пÿртре: сенри, сакки, урайĕ те хуралнă,
Çăвакан çук, кинсем ашшĕсенђе...

Йăван, Мишша арăмĕсем пăрахнă,
Пĕр пĕђђенех хăварнă Мишука,
Ватă пуçпах тырра та хайех акнă,
Йăвăр кăçал ăна çурхи ака.

Сĕлĕ пĕлтĕр пулман, урпа тăптаннă,
Пăри шăтса та, — çунђĕ хĕвелпе.
Çавна кура варлăх тупма аптранă,
Акман çынсем сахал йулман йалпе...

Çĕртме тума вăхăт ђасах ак килĕ,
Анђах Мишукăн çук вайпитти çын.
Ăçта кайас? Камран ыйтас? Мĕн пулĕ?
Лаша та çук. Кинсем те кайнă. Хут̆ те вил...

II.

Мишук пекех Клавйе, Ваçли йултăшĕ,
Пуçне усса ларат̆ ак пахђара.
Ваçли вырне çерем ун хурăнташĕ,
Йешĕл çерем — сĕтел çинђи ђара...



„Аслати Умĕн" автăрĕ
**В. Й. Рсай.**

Ун çÿçĕсем пилĕк çине саланнă,
Ăна çивĕтлеме хађ кирлĕ мар.
Хађ çук савни... Мĕнма Кавал çаралнă,
Мĕнма хађ çук Ваçлей çак пахђара?..

Каç çеç иккĕш кунта савăнса ларнă,
Йулашки хут пĕрле сăмахласа;
Пĕлĕт çинђи çăлтăрсем хыт выђанă,
Ват уйăхĕ аптранă ахлатса...

Стришна ађи Кирле çине тăрса итленĕ,
Çине тăрсах йĕрленĕ Ваçлейе.
Ваçлей темле сăмахсем çивĕђленĕ,
— Тупатпăр, — тенĕ çĕтнĕ тĕллейе.

— Пире хĕсни çитет, епĕр вăраннă,
Асту, ан ман, ăнлан, пулмаст̆ йĕрсе.
Çак çĕршывра еп те çынла çуралнă,
Ман хамăн та пурнас килет хĕрсе...

— Пайан ирпе Çеркей патне еп кайрăм,
Вăл ĕнер çеç хађ килнĕ варçăран.
Харах алли ун çук... Унпа калаçрăм,
Вăл та пире ус çук, тет... патшаран!..

Çапла, Клавйе, савни... еп кайăп,
Анђах йĕме ес ђаран, ђун Клавйе!
Пĕлеп, пит йывăр... Киле хађ кайăн.
Сывпул, ан ман, асту ес Ваçлейе...

Ĕнер Ваçлей, ĕнер çапла каланă,
Пайан ирпе вăл çук тăван йалта.
Пайан ăна тимĕр вакун алланă,
Тен пайанах пулат̆ вăл ак çарта...

Клавйе ларат̆, хура куçсем шывланнă,
Ним те илтмест вăл сутă пахђара...
Ун умнеллех — стришна Кирли çывхарнă,
Вăл усала мĕн кирлĕши вара?!..

Акă Клавйе кайрантараххăн сисрĕ,
Сиксех вăл тăђĕ хăйĕн вырĕнђен.
— Мĕн кирлĕха сана усал, ес путсĕр!
Халех ес тух, ес тух çын пахђинђен...

Йуратма мар, сана еп кураймастăп,
Хут̆ те вун çул çÿре — еп санăн мар.
Кайах кунтан, кайах, хурах, çухратăп,
Ула сăнна санне еп курман мар!..

Анђах, Кирле каймаст̆, вăл тем каласшăн,
Ђĕлхи выртмаст̆ çав майлă майланса,
Çийĕ çинђи йÿстав пиншакĕ ашшĕн,
Хăй кайнă амĕш пек мăнтăрланса...

Кăвак куçсем çамки çинђе антранă
Ниçта кайма аптранă ђĕпсем пек...
Анђах çапах: — Клавйе, ăнлан, вăл кайнă...
Ларха манпа ес, — терĕ çÿп тăкнă пек...

— Кай, кай кунтан! Сана еп кураймастăп,
Хут̆ те вун çул çÿре, еп санăн мар.
Мĕн кирлĕха сана тата? Ес аскăн,
Ухмах, ăнлан, еп саншăн çуралман.

Кирлен йун пек хĕрлĕ сăнĕ хуралҫĕ,
Ун пек сăмах илтме вăл ҫапсăр мар.
— Йурат, кайап, ман ĕмĕтĕм ҫухалҫĕ,
Анҫах, Ваҫлей те йулмĕ пуранма...

— Ваҫлей мĕнле ҫынне епĕ пĕлетĕп,
Пĕлсем, каҫ еп те пултăм пахҫара,
Ун сăмаххи пирки еп систеретĕп,
Ваҫлей текен ҫынпа сывпул вара.

— Кай, кай халуй! Ваҫлей хăравҫă мар,
Еп те сиртен никҫан та хăраман!
Кайах, кайах! Ес путсĕр, ес ҫахан!
Мĕн калăн ес; питна сурса таксан?!.. —

Ҫапла Клавйе татах та хыт каларĕ.
Татах та хартрĕ ҫапла Кирлене.
Вĕри ҫĕри кăкрисене шаккарĕ,
Унтан ҫил пек ҫуптарҫĕ килнелле...

III.

Хĕлле. Ҫанталăк сивĕ, уй-хир шашшура,
Уй-хир кĕпе тăхăнна ҫĕнĕрен.
Вăрҫă пĕтмен... — Мĕн кирлĕши, ах тура, —
Тесе лараҫ ҫынсем ак пĕр пӳртре...

Кунтах Мишук, вăл ҫиснийех анрана,
Уна нимле етем йăпатас ҫук.
Варшшавăран кӳрĕш аҫийех ҫыру йана,
Мишук Ваҫлейĕ халĕ ĕнтĕ ҫук.
—«Таван анне, атте, сире салам,
Еп хаҫ Варшшавăра пурнап.
Сире тата ҫĕнĕ хыпар калам:
Мишук Ваҫлейĕ ҫук,
Ăна персе вĕлерҫĕҫĕ ҫĕрккаҫ...
Хаҫ салтаксем вăрҫăсшăн мар.
Киле килес килет ман хамăн та.
Сывă пулăр. Сыв йулап. Макар». —

Кӳрĕш аҫи ҫапла ҫырса пĕлтернĕ,
Йал ҫыннисем тĕлĕннĕ ҫыруран.
— Мĕнма вара ҫамрак ҫынна пĕтернĕ?
Мĕн тунăши вара вăл вăрҫăра?!.

Кӳрĕш аҫи тӳрех ҫырма харанă.
Пит лайах пĕлнĕ, пĕлнĕ мĕншĕнне;
Ăна Ваҫлей хайех пĕрре каланă,
Ҫакас тесех каланă патшине!..

Ваҫлейсене салтаксем пит йуратнă,
Пĕрле вĕсем тапратнă сăмаха:
— Оккоп ăшне камсем пире таратнă?
Камсем йунлатнă пуҫахха?

Пĕрре вĕсем вăрҫса оккопра выртнă,
Ҫут офитсер хыт ҫупнă салтака,
Вĕсем вара ăна нумайăн тытнă,
Унтан ҫиксех пăрахнă калтана.

Ҫавăн пирки вĕсем кайран ҫакланнă,
Ҫавăн пиркийех лекнĕ тĕрмене.
Ваҫлей ҫинҫен кунтан та ҫыру йана,
Стришна Кирли пĕтернĕ мĕскĕне.

Ашшĕ, Мишук, пĕлмест: — Мĕнма вĕлернĕ,
Мĕнма ҫухатнă ман ывăлăма?
Мĕн тунă вăл? Кама, хăҫан хĕненĕ?..
Патша, патша, тавай, ывăлăма!!...

# САВĂСЕМ.

## Переккопа илни.

Пулҫĕ кунта кĕрешӳ,
Питĕ вайлă тытăҫу!
Виҫĕ кун та, виҫĕ ҫĕр
Тупă сасси ҫĕтрегрĕ.
Виҫĕ кун та, виҫĕ ҫĕр
Полуострăв ҫĕтрерĕ.
Хăруш, пысăк снаретсем
Пĕлĕт тусан хăпартрĕҫ,
„Хĕрлин" паттăр аҫисем
Хăруш ваййа сăнарĕҫ.
Йулашкинҫен, сасартăк,
Ҫӳлтен панă приккаспа,
Тĕвĕнтĕмĕр аттака,
Ҫыхлантăмăр тăшманпа.
Йывăр снарет ҫурăлни,
Вĕри пулĕ ҫĕвлетни,
Ҫивҫĕ хĕҫĕ йанрани,
Етем хайар ҫухăрни —
Ҫыхлăнҫеҫĕ пĕр ҫĕре.
Шав хупларĕ кунҫĕре.
Тăшман вайĕ ҫĕтрерĕ,
Ереҫĕсем хуҫалҫĕҫ:
Пăшалсене ӳкерсе,
Суранлине пăрахса,
Вайхăватне ҫухатса,
Намăссине пытарса—
Тăшман тарҫĕ хăраса.
Йешĕл тĕтĕм сирĕлҫĕ
Тăшман куҫран ҫухалҫĕ.
Сара-хура шинелсем,
Услап-пронĕпойĕстсем,
Пысăк хăруш тупăсем,
Хĕвел анаҫ таллкисем —
Йулҫĕҫ паттăр алăра.
Ӳкрĕ аслă Переккоп—
Капиталăн шанҫăкĕ,
Ҫĕленсенĕн хăваҫĕ.
Сута, хитре ҫанталăк
Ҫатаймарĕ куҫҫӳле,
Ҫатаймарĕ мăшкăла.

**Мĕтри Пĕтерĕ.**

## Поета.

Хастар йултăш, кăвар ҫĕлхеллĕ,
Кастар, вакла ҫĕлхӳпеле.
Йуну вĕри, вайу тĕреклĕ —
Кĕреш, кĕреш тăшманупа.

Тăшманусем нумай пулин те,
Кам ҫĕнесси паллах, паллах;
Вай-хална шан: вĕсен пурин те
Шухăш сапăнҫăк, вай ҫукрах.

Сан сассупа ҫĕр-шыв йанратăр,
Тăшмансем таҫҫăр ҫĕтресе,
Пур ĕҫ тĕнҫи тăрса тапрантăр
Ĕмĕрхи пусмăрне сирсе.

Йурла, йурла, йурру илемлĕ,
Шухăшу тĕрĕс, ху хастар;
Еп, ҫĕнĕ шухăшпа ҫĕнелнĕ
Ҫăваш аҫи, йурруна йар.

**А. Ҫулĕҫ.**




Отрет килђĕ, тенĕ хыпар йал тăрăх, пĕр вĕçĕнђен пуçласа тепĕр вĕçне çитеђђенех, çанçурăма çӳçентерсе, çиçĕм пек иртсе кайрĕ.

Отрет!.. Отрет пуçĕнђе комунис,... комиссар... Салтакĕсем пăшалсемпе, тухйа пек шĕвĕр çĕлĕклĕ, çамкисем çинђе пурин те пысăк хĕрлĕ çăлтăр...

— Пĕтрĕмĕр,—терĕç йал çыннисем.—Пĕтерђĕç, хĕл варринђе тырăсăр тăратса хăвараççĕ ĕнтĕ,—терĕç хăраса ӳксе.

Арçынсен куçĕсем салхуланђĕç. Хĕрарăмсем йĕпеннĕ куçĕсене тутăр вĕçĕпе шăла пуçларĕç. Ађа-пăђасем тӳшек хыçне лăпђăнса пытанђĕç. Пĕр самантрах хĕллехи илемлĕ хĕвел айĕнђе йăл-йăл кулса ларакан йал лăп пулђĕ.

— Мĕн тырри пухма килђĕçши ĕнтĕ? Ех, пурăнăç,—хамăра çиме те çитместçке тыррăмăр, ăна та пулин туртса илсе кайаççĕ. Ей мăнтарăн хресђен пурнăçĕ...

— Мĕн тырри?! Ара, илтмерĕним иртнĕ вырсарни кун претçетаттĕл халăх çинђе приккас вуласа пађĕ. Выçлăх çулсем ђухне илнĕ вăрлăха кайалла тавăрмалла, тенĕ унта. Ирĕклĕн памалла тенĕ, ирĕклĕн памасан...

— Мĕн вара ирĕклĕн памасан?

— Ирĕклĕн памасан рек-ви-сат-си тумалла тенĕ. Çаплах калана. Уççăнах.

„Реквисатси“ тени хресђенсене ђылай тарăхтарнă. Вĕсем ăна револютси пуçлансан ђылай çулсем ђăтса пурăннă. Çавăнпа та пайан вĕсем „реквисатси“ сăмаха тепĕр хут илтсен çав тĕрлĕ хăраса ӳкрĕç.

* * *

Матĕрне инке тин кăна кăмакине хутса йанăђђĕ,—урам йенђи ђӳређе йанаххине шан-шан-шан шаккарĕç. Шанса пăрланнă, куççуӆпех макăраса ларакан кантăк витĕр Матĕрне инке урамалла пăхрĕ. Шаккаканни Митта Кĕркурийĕ иккен. Йал исполниттĕлĕ вăл. Çийĕнђе çĕтĕк кĕрĕк, пуçĕнђе кăвак сурăх тирĕнђен çĕлене çĕлĕк, аллинђе хунав йуман ђукмар.

— Мĕн сăмах, Кĕркури пиђђе?

Митта Кĕркури, шал йенђен çын сассине илтсен, пуçне çĕклерĕ те, аслăк пек усăнса аннă куç харшисем айĕнђи икĕ тĕксĕмлене пуçланă куçĕсене мăђ-мăђ хупса илђĕ.

— Халăх ăшне тухăр, халăх пухма хушрĕç,—терĕ.

— Мĕн халăхĕ тата?

— Пĕлместĕп. Хуларан салтаксем килнĕ, çавсем пухтараççĕ,—тет.

Митта Кĕркурийĕ малалла уттарђĕ.

Салтаксем тесен—Матĕрне инкен ђĕри лаштах çурălса кайрĕ. Матĕрнен пĕлтĕрхи куланайĕ татăлса пĕтеймен—хал çитмерĕ. Кăçалхишĕн те пĕр пус та паманха—укçи-тенки çителĕклĕ пулмарĕçке. Мĕн пур пек йулнă тырри те ак пайан армана кайса выртаť. Çăварĕ нумай—улттăн, ĕçлекенни çук. Ашшĕне пĕлтĕр вăрманта йăвăç çапса вĕлерђĕ.

— Ех, пурăнăç та пурăнăç мар ĕнтĕ ман пек пĕђђен хĕрарăма. Ку та кирлĕ, вăл та çук. Ку та çĕтĕк, тепри те çурăк. Кăна саплас пулаť, теприне çĕнĕрен тăвас пулаť. Çитменнине тата хырăç-марăçне те татса пыр. Пĕрре те мар, кашни кун тенĕ пекех тупăнаť—пайан çĕршĕн, ыран çуртшăн тӳлесе йар, унтан выӆăхшăн персе çитет, тепĕр кун тата ыттишĕн тӳле. Тупăнаť вăл. Кашни кун тыра сутсан та çитес çук. Ăçтан илесши ĕнтĕ вăл тыррине? Ку та çитмест ха—тата пупне те пар. Ак, иртнĕ ернере çех ђунтан вуншар кĕрепенкке сăптăрса кайрĕ. Хамăра ваӆӆи йулмарĕ те. Хамăрăн мĕнпе тутă пулас ĕнтĕ?

— Ниђево, пурнăн, вилмĕн—улпут майри марçке, выçă та ларса пахăн. Ђфу, ђорт, çĕр тĕпне, тепĕр тесен, комунĕ мĕнĕпех.

Матĕрне инке, çиллипе, кăмака умне ăшăнма пынă ађисене те ђутах тытса силлесе пăрахађђĕ.

Арçынсем пĕрерĕн-икшерĕн урам тăрăх хурал пӳрђĕ йеннелле сулăна пуçларĕç. Пуçĕсене уснă, çĕлĕкĕсене куç çинех антарса лартнă. Майĕпен, йăвашшăн калаçкаласа пыраççĕ.

* * *

Матĕрне инке те, васкарах кăмакине çунтарса пĕтерсе, пĕр ђӳлмек улма лартса хупса хăварђĕ те, хурал пӳрђĕ йеннелле тухса утрĕ. Каймасан та йурамасť—килхуçи вĕт, пур çĕре те çитес пулаť: пӳртре те тулта



Урăм йенђи ђӳређе йанаххине шан-шан-шан шаккарĕç.

# СОВЕТСЕМ ТАВРА.



Çӳлте, сылтӑм йенђе — Хула советне суйлас умӗн Шупашкарта пулса иртнӗ миттӗнк, ун çумӗнђе — миттӗнка тухнӑ типокрафинђи рапођӗйӗсем. Айалта, сулахай йенђе — Хађӑк йаленђи (Ишлей-Покровски вул) хресђенсем йалсоветне суйлама пухӑнаççӗ; ун çуменђе — хресђенсем хӑйсем кергес тене канғаташа сасалаççӗ.

та, хӗрарӑмшӑн та, арҫыншӑн та, тата халах ҫинђе те арҫынсемпе ал ҫӗклес пулаť.

Хурал пӳртне ҫын туп-туллийех пуханна. Ахаљ ђухне пуху таврашне сахал пыркалаҫҫӗ—пӗри ӗҫ пур тесе каймасť, тепри тата урӑх сӑлтав тупса килтен тухмасť. Пайан, ахӑртне, отрет килнӗ тени пурне те ӑшалантарса килђӗ пулмалла.

Матӗрне инке, кӗрсенех, аҫта хӗсӗнсе тӑрасши тесе, урлӑ-пирлӗ пӑхкала пуҫларӗ. Ниҫта та вырӑн ҫук, пур ҫӗрте те ҫынсем ларса та тӑрса та тулнӑ. Хӗсӗнкелесе кӑмака сакки патне пырса тайанђӗ. Хӗларан килнӗ салтаксене курас тесе пӗр-ик хутђен ђӗвен тӑрса та пӑхрӗ, анђах нимех те кураймарӗ—умра арҫынсем тӗкме пек хӗсӗнсе хупӑрласа тӑраҫҫӗ.

Пӳртре ӑшӑ пула пуҫларӗ. Ђӗлӗм тӗтӗмӗ пӗлӗт пек каплана-каплана килсе пыра кӑтӑклантараť, ђыхӑнтараť. Сывлӑш вӗриленет. Ӑшӑ кӗрӗк айӗнђе ҫан-ҫурӑм нӳрленет. Ҫилпе, сивӗпе пиҫнӗ питсем ҫинђе вӗђђеҫ ҫӑлтӑрсем йӑлтӑртаҫҫӗ. Анђах ҫапах та пухха пуҫлама васкамаҫҫӗха, ахӑртне, йалӗпех килесси кӗтеҫҫӗ пулмалла. Ҫынсем ахаљ тӑриђђен ђӗлӗме паклаттараҫҫӗ, ытла ђӗнмесӗр тӑрасран пӗр-пӗринпе хуллен калаҫаҫҫӗ, калаҫнӑ май хайсем малти кӗтеселле, сӗтел хушшинђе ларакан салтаксем йеннелле пӑха-пӑха илеҫҫӗ.

* * *

Пуху пуҫланђӗ. Малтан комиссар текенни калама пуҫларӗ. Сасси мӑна, уҫӑ. Ђӗлхи пӗртте ҫыхланмасť—сӑмахӗсем шыв пекех йухаҫҫӗ. Ленин ҫинђен каларӗ. Ҫапла ҫапла, тет, пурӑнна, ӗҫленӗ, тет, ђухӑнсемшӗн тӑрӑшна. Ђухӑнсене вӑл йуратнӑ, ђухӑнсем те ӑна йуратнӑ, тет. Анђах вӑл пӗлтӗр вилсе кайрӗ, пайан вӑл вилни шӑп ҫулталӑк ҫитрӗ, тет.

Матӗрне инке тӑнласа итлерӗ, пӗр сӑмахне те сиктерсе хӑвармарӗ. Ленин вилнӗ тенине илтсен, Матӗрне ӑна шеллерӗ.—Шеллемесӗр, мӗн ђухлӗ тӑрӑшнӑ вӑл пирӗн пек ђухӑнсемшӗн, хайӗн ҫинђен аса та илмен, мӗскӗн. Вилӗмӗ те кӗтмен ҫӗртенех килсе ҫитет ҫав—вӑхӑтсӑрах тупӑка кӗрсе выртрӗ пулаť. Йавӑр тӑпру ҫӑмӑл пултӑр, ыра ҫыннӑмӑр, ырлӑхра, тутлӑхра, ҫӳлти патшалӑхра пул.

Матӗрне инке сӑхсӑхса илесшӗнђӗ те, анђах арҫынсем куласран хӑрарӗ.

Комиссар нумай каларӗ, анђах реквисатси ҫинђен пӗр сӑмах та хушмарӗ.

— Ђейе тош! Пӗлетпӗр епӗр сирӗн пеккисене. Есӗр йалана ҫапла: малтан апла та капла, сирӗншӗн те пирӗншӗн, ђӗлхӗр те ҫеп-ҫемҫе, хӑш ђухне куҫҫулне те тумлаттаратӑр, анђах кайран, реквисатси тӗлне ҫитсен, ђӑтса кӑна тӑр, ӑшалама тытӑнатӑр—кунтан та ђӗпӗтсе пӑхатӑр, тепӗр тӗлтен те ҫыртатӑр. Пӗлетпӗр епӗр сире, пит таса пӗлетпӗр...

Ҫынсем малалла мӗн пуласса кӗтсе тӑраҫҫӗ.

— Малалла калама Тӑмаланава сӑмах паратпӑр, тет претҫетаттӗл.

Матӗрне инке хыҫӗнђе таракан Макаҫ старик ђавсаран кӑшт тӗртрӗ.

— Тӑмаланӑв текенскер вӑл Еђук вӗт, аставатна пирӗн йалта кӗтӳ кӗтсе пурӑнђӗ.

— Кай, ан калаҫ!

— Ђанахах ҫав, Еђуках.

Матӗрне инке ђӗрне вӗҫҫӗн тӑрса кармашса пахрӗ, анђах нимех те кураймарӗ—арҫынсем йӑлтах хупӑрласа тӑраҫҫӗ.

Тӑмаланӑв калама тытӑнђӗ.

— Епӗ, тет, йулташсем, Еђук. Аставатӑр пуљ хавар йал кӗтӳҫне Еђука, тет.

Сасси хайӗн пӑртак урмӑшланђӗ, темскер пырне тулса ларнӑ пек туйанђӗ.

— Йепле аставас мар, аставатпӑр. Ара, пӗђӗкренпех пирӗн йалта пурӑнса ӳсрӗнҫке. Хӗрлӗ ҫара та пирӗн йалтанах каймарӑна вара?

Хурал пӳртӗнђи ҫынсем йӑшӑлтата пуҫларӗҫ. Халиђђен вӗсем пӗр хускалмасӑр комиссар каланине итлесе тӑђӗҫ.—Ђинлӑ сын калаť, итлес пулаť, итлемесӗр кӳрентерсен аван мар. Комиссар хыҫҫӑн Тӑмаланӑв калаť тесенех вӗсем пуҫӗсене йалтах ҫӗклерӗҫ.

— Ара, хамӑр ҫын вӗт, хамӑр хушӑра ӳснӗ, итлес ӑна, итлес, тен хамӑр майлах калӗ.

— Майперех, ан пӑшӑлтатӑр ха!

— Итлӗр, ан кансӗрлӗр!

— Итлӗр!.,

Тӑмаланӑв калама тытӑнђӗ. Малтан вӑл хай ҫинђен калама пуҫларӗ.

— Епӗ ӗлӗк, йулташсем, кӗтӳ кӗтсе пурӑннӑ, мӗншӗн тесен урӑх ниҫта йурӑхсӑр ҫын пулнӑ—хут пӗлмен, ҫынпа пуплӗ сӑмах хушса калаҫма пултараймаң. Хӗрлӗ ҫара кайсан хута та вӗрентӗм, политтӗкка та пӑртак тавҫӑра пуҫларӑм. Комуниссен парттине ҫырӑнтӑм, мӗншӗн тесен, пуҫпа шухӑшласа пӑхрӑм та, ђӑнах та пирӗн пек патраксемпе ђухӑн хресђенсемшӗн тӑрӑшакан пӗр Комуниссен партти анђах иккенне пӗлтӗм.

Ҫынсем Еђук куҫӗнђен пӑхса итлесе тӑраҫҫӗ.

Еђук Хӗрлӗ ҫар ҫине куҫрӗ.

— Хӗрлӗ ҫар—вӑл хамӑрӑн, ӗҫлекенсемпе хресђенсен ҫарӗ. Унта, ӗкӗкхи пек, ҫапмаҫҫӗ, мӑшкаламаҫҫӗ. Унта пурте йулташ. Нађђаљнӗксем те сана йулташ тесех ђӗнеҫҫӗ. Вӗрентес тӗлӗшрен вара темне те вӗрентеҫҫӗ, ӗлӗкхи улпут ађисем вӗренекен кимнаҫинђен пӗртте кайа мар. Аван Хӗрлӗ ҫарта пурӑнма, аван...

Еђук тата нумай йапала ҫинђен каласа ӑнлантарђӗ. Пурне те тӗплӗн, йӗркеллӗн, ӑнланмалла каласа параť. Аҫтан кӑна вӗренсе ҫитнӗ вӑл пурне те, тӗлӗнмелле.

Матӗрне инке те питӗ тӑнласа итлесе ларђӗ. Итлемесен те итлӗн, ара ытла та ђӗре ҫумнех пырса выртаҫҫӗҫке Еђук сӑмахӗсем. Халиђђен ӑна никам кун пек ӑнлантарса паман, пайан тин вӑл Хӗрлӗ ҫар ҫинђен, Совет влаҫӗ ҫинђен, тата ытти ҫинђен ђӑн сӑмах, ђӗрӗрен тухна сӑмах илтрӗ.

— Совет влаҫӗ ђухӑнсемшӗн тӑрӑшаť, вӗсене хайсен хуҫайствине тӗреклетме пулӑшаť. Вӗсенђен кулланайне те сахалтарах илет. Илнӗ кулланайне те каллех хресђенсене параť: лашасӑррисене лаша туйантарса параť, ҫӗрӗҫлемелли хатӗрсем ҫук пулсан вӗсене туйанма пулӑшаť—ан тив, ђухӑнан та, пуйананни пекех, хайӗн ҫӗрне акса уҫа курма май пултӑр.

Матӗрне инке ҫаксене пурне те ӑнланђӗ. Пурне те вӗсене кӑмӑл тусах итлесе ларђӗ. Итлесе ларнӑ май хайне те темле ҫӑмӑллӑн туйӑнса кайрӗ, куллензи хуйхӑ-суйхӑпа хытса кайнӑ ђӗри те лаштах ҫемҫелсе кайрӗ. Еђук каланӑ май вӑл хайӗн пурнӑҫне аса илсе пӑхрӗ: ҫитменлӗх, выҫлӑх, упӑшкасӑр пурӑнӑҫ—вӗсем пурте Матӗрнен ӑшђиккине сахалах тавалтармаң. Анђах халӗ, Еђук калана ђухне, вӗсем, ӑшђикке ҫунтарса мар, ал-ура вайне, пӗтӗм ђун-хавала тата ҫӗклентерсе, тӗреклетсе пыраҫҫӗ.

— Ђӑнах та, кама айапласа хамӑр ҫуклӑхшӑн, ђухӑнлӑхшӑн? Совет влаҫне? Ҫук, вӑл айапла мар, вӑл пире ђухӑнлӑхран тухма пулӑшаť, вӑл пире ура ҫине тӑраťаť. Ей, Совет влаҫӗ сывлӑхлӑ пултӑр, вӑл пулсан тен епӗр те хаҫан та пулсан ҫын шутне кӗрӗпӗр.

Еҭук каласа пӗтерҭӗ. Кӑсйинҭен сӑмса тутри кӑларса ҫамки ҫинҭи тарне шӑлҭӗ те, хӑй вырӑнне кайса ларҭӗ. Никам ним сас памасӑр тӑрать, пурте шухӑша кайрӗҫ.

Претҫетаттӗл ыйтусем пама хушрӗ, — тен кам та пулсан мӗне те пулсан ӑнланаймарӗ пуҭ?

— Йепле ӑнланас мар, ӑнлантӑмӑр, пурне те ӑнлантӑмӑр. Тавта пуҫ сире пирӗн пата килсе каласа панӑшӑн. Епӗр тӗттӗм халӑх, мӗн пӗлетпӗр. Пире пурте пӗрех, шурӑпа хурана епӗр ҭасах уйӑраймастпӑр ҫав.

Ыйтусем ҫапах тупӑнҭӗҫ. Вӗсем пулмасан та пултараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ҭӗрене ыраттаракан ыйтусем кашнинех пур. Вӗсене пӗр ҭӗре ҫемҫелнӗ ҭухне ҫынна каласа памасӑр ҭатма ҫук.


Тӑмаланӑв калама пуҫларӗ.

Матӗрне инке те темскер ҫинҭен ыйтасшӑн пулҭӗ те, анҭах калама тытӑнсанах, такам айак пӗрҭинҭен, тӑнк, тутарҭӗ.

— Реквисатси ҫинҭен...— теме анҭах ӗлкӗрҭӗ. Претҫетаттӗл хӗрарӑм сасси илтӗннӗ йеннелле ҫавӑрӑнса пӑхрӗ. Арҫынсем те, ҭӑр-р-р! пӑхрӗҫ ҫавӑнталлах. Анҭах Матӗрне инке шӑлне ҫыртрӗ те кӑмака сакки ҫине ҫыпҫӑнсах йӑпшӑнса ларҭӗ.

Мӗнле реквисатси ҫинҭен?

Матӗрне ҭӗнмест. Ҫынсем те шӑп пулҭӗҫ. Пӗр вӑхӑта темле ҫан-ҫурӑм сиввӗн ҫӳҫенсе кайрӗ.

— Пулать те ухмах хӗрарӑм, мӗн тӗртрӗши ӗнтӗ ӑна реквисатси ҫинҭен асӑнма?

— Ан та кала, кунта епӗр ун ҫинҭан ап пуҫлаҭҭӑр тесе пӑшӑрханса тӑратпӑр, вӑл пур, ухмах пуҫӗпе, хӑй пуҫласа йарать.

— Ҭфу!..

Комиссарсем сисмерӗҫ. Анҭах Еҭук Матӗрне инке мӗнле реквисатси ҫинҭен ыйтса пӗлесшӗн пулнине ҭасах сисрӗ. Сисмесӗр, ара, вӑл йалта пурӑннӑ ҭухне йалти халӑха реквисатси тени йепле хӑрагнине лайӑхах астӑвать ҫке.

— Отрет килҭӗ! — тесе хумхантарса кайать йал тӑрӑх хӑрушӑ хыпар.

— Апла пулсан каллех пӳлмесене шӑпӑрпа шӑлса кайаҫҫӗ ӗнтӗ, — тесе ӑшаланса ӳкеҭҭӗҫ хресҭенсем. Ҭанах та отрет килеҭҭӗ те хресҭенсене йалтах сӑтӑр туса кайаҭҭӗ.

Еҭук ҫакна аса илҭӗ те, Матӗрне инкене, унпа пӗрле пур арҫынсене те, лӑплантарҭӗ.

— Епӗр, йулташсем, сирӗнне туртса илме килмен, сире пулӑшма килнӗ. Ленин хулапа йал ҫыхӑнӑвне ҫирӗплетме хушса хӑварнӑ. Ҫавӑнпа епӗр, хулара пурӑнакан салтаксем, сирӗн йала шефа илтӗмӗр. Хаҭ ҫавӑн пек ҫӗнӗ сӑмах пур. Вӑл акӑ мӗн тенине пӗлтерет: калӑпӑр, есӗр тӗттӗм халӑх, — епӗр сире ҫутта тухма пулӑшапӑр, хаҫат-шурналсем йарапӑр сирӗн пата, кӗнекесем парапӑр сире, вӗсем тӑрах есӗр ҫӗре мӗнле ӗҫлесен, выҭӑха мӗнле тӑрантарса усрасан усӑллӑрах пулассине тупса вӗренӗр; йе сирӗн йалта кулаксем пуҫ пулса тӑраҫҫӗ пулсан, епӗр сире вӗсен аллинҭен хӑтӑлма пулӑшапӑр. Ак, хаҭхинҭе те епӗр комиссарпа пӗрле сире Ленин ҫинҭен, Совет влаҫӗ ҫинҭен каласа пама килтӗмӗр. Атту сире кулаксем тем те пӗр суйеҫтерсе пӗтерме пултараҫҫӗ.

Пуҫ ҫинҭен лаштах кайрӗ. Ҫынсем те лаштах сывласа йаҭӗҫ. Ҭӗре уҫҫӑнах тапма тытӑнҭӗҫ. Матӗрне инке те, паҫӑр айак пӗрҭинҭен ҭышнине манса, савӑнаҫлӑрах пӑха пуҫларӗ. Арҫынсем те тек сивӗ куҫпа ҫаврӑна ҫаврӑна пӑхма пӑрахрӗҫ.

Ҫынсен ҫӑварӗсем уҫӑлҭӗҫ. Вӗсем хӑйсем пӗлнӗ пек Еҭука ырӑ сӑмах каланӑшӑн тем пекех тавтурӗҫ. Каллех каласусем, ыйтусем тапранса кайрӗҫ. Паҫӑртарах ҭӗнмесӗр тӑраканнисем те хаҭ хӑйсене кирлисене ыйта ыйта пӗлҭӗҫ. Тем тӗрлӗ ыйту та пулҭӗ. Пурне те вӗсене комиссарпа Еҭук ӑнлантара ӑнлантара паҭӗҫ.

Тулта автансем ҫурҫӗр ҫитнине сиссе йурра йараҫҫӗ. Анҭах хура л пӳртӗнҭи халах вӗсене илтмест, сӑмах ҫине сӑмах тупсах пырать.

Пуху пӗтсен претҫетаттӗл «Интернатсионал» йурлама сӗнҭӗ. Пурте ура ҫине таҭӗҫ.

Сухаллӑ, ватӑ старикеем, урӑ ҭухне нихӑҫан нимле йурӑ йурламанскерсем, револҭутси пулни 8-мӗш ҫул пынӑ ҭух пирвайхи хут «Интернатсионал» йурлама тытӑнҭӗҫ. Сӑмахсене халиҭҭен те илтмен, кӗввине тавҫӑрса илме ҫук. Анҭах йурари Еҭук хыҫҫӑн каласа пыракан сӑмахсенҭен:

Тӗнҭе ӗҫне тӑван ӗҫ ҫарӗн —
Ӗҫлекенсем епӗр анҭах,
Ҫӗре тытма пур тивӗҫ пирӗн,
Харам пырсен — нихӑҫан та,

тейекен ҭӑн ҭӑн ӗҫ хресҭенӗ сӑмахӗсем ытла та ҭӗрене ҫыпӑҫрӗҫ.

* * *


Матӗрне инке киле таврӑнсан ҭылайҭҭен шухӑшласа ларҭӗ.

Матӗрне инке киле таврӑнсан ҭылайҭҭен сӗтел хушшине ларса шухӑшласа ларҭӗ. Еҭук сӑмахӗсем ӑна ытла та пысӑк шухӑша йаҭӗҫ. — Ҭанах та, ак нумайах та пулмасть йалта кӗтӳ кӗтсе пурӑнатҭӗ. Унпа никам путлӗ калаҫман, никам ӑна ҭисламан. Ак, хаҭ пыр та пах ун ҫине — никам та ку ӗлӗкхи кӗтӳҫӗ тесе калас ҫук. Пурне те тӗплӗ, пурне те пӗлсе калаҫать. Кам пулӑшрӗши ӗнтӗ ӑна ҫын шутне кӗме?—Паллах, Совет влаҫӗ.

— Совет влаҫӗ пире, тӗттӗм хресҭенсене, ҫутта кӑларма тӑрӑшать; епӗр пурте тӗттӗмлӗхрен хӑтӑлсан, тен, пайанхи хуйхӑ-суйхӑсене ӗмӗрте те тек тӗл пулас ҫук,—тенӗ Еҭук сӑмахӗсене аса илҭӗ те Матӗрне инке, тӳшек ҫинҭе сарӑлса ҫывӑракан аҭасем ҫине ҫавранса пӑхрӗ.

— Ҫывӑрӑр, аҭамсем, ҫывӑрӑр, канӑр. Сирӗн пурнӑҫ малашне. Епӗр хамӑр ӗмӗре тӗттӗмре, хӗсӗкре, хурлӑхра пурӑнса ирттертӗмӗр. Сирӗн умра ҫутӑ, ирӗк, савӑнаҫлӑ пурнӑҫ. Совет влаҫӗ сывӑ пулсан есӗр те, Еҭук пек, вайлӑ, ӑслӑ, тӗреклӗ ҫынсем пулӑр.

Матӗрне инке кӑмака ҫамки ҫинҭе хӑрӑм кӑларса ларакан лампине сӳнтерҭӗ те аҭисем ҫумне ҫывӑрма кӗрсе выртрӗ.

Автансем йулашки хут хӑйсен йуррине шӑрантарса йурласа йаҭӗҫ.

**Патман.**

**Н. Шупуççынни.**

# ЙЕРКĔН*).

**12 йурăллă поемă.**

(*Малалли*).

**VII. Сухатў (Сапантуй, Акатуй).**

Кавак çута ўкрĕ шурампуçĕнђен,
Йерипен саралђĕ нўрлĕ çĕр çинђе.
Хĕвел тухаç санне хĕрлĕ сар сĕрет,
Ăна типĕтмешкĕн уçа çил вĕрет.
Тĕтреленет улах, пасланаť Йĕршшў,
Ирхи тарин йурри кўрет килĕшў...
Ĕçђен ђаваш тухна ирех хай хирне,
Пупле пупле аваť шурти çеремне:
—„Урпа аксан — угмал кунтан
Кĕрекене кўртĕп“ — тет;
«Йĕтĕн аксан — кил çуртăмран
Хĕре парса йарап», тет.
— «Ну, ну! Мĕн урмашан? Утсам!
Машкал! Хĕрриперех пырсам!
Ак пĕртакран хамах сана таварăп,
Йĕршшў çинђи хайах çине какарап.
Ирхи кўлĕм иртсен Сухатўне пĕрле
Иксĕмĕр кайапар хĕрсе çитнĕ çĕре».

Çўлти касси улăхĕнђе
Сухаç сасси илтĕнет,
Ула лаши ун умĕнђе
Ута-ута ĕшенет;
Хайсем çапах Сухатўне
Ђупма кайасшан васкаса,
Ăшшамашсен вĕри йунне
Катартасшан ăмартса.

Йухаť Йĕршшў йалтăртатса
Симĕс улăх хушшипе,
Туй çĕлен пек авкаланса
Çырма-çатра тăршшипе.
Унта-кунта вĕтлĕх вăрман
Йĕршшў икĕ йенĕпех:
Вĕренепе хуна йуман,
Тата шĕшкĕ йĕркипех.
Çўлти кассен уй тавайкки
Йĕршшў çумнех перĕннĕ,
Варман пусна сăрђĕн çамки
Тĕксĕмленсе тĕрĕннĕ.
Таваť йалан киремеђĕ
Хĕрлĕ çыран хĕрринђе;
Асанмаллăх, ун тивлеђĕ,
Çалкуç йухаť тĕлĕнђе.
Çалкуç шывĕ тапса тăраť,
Шыв арманне çавăраť,—
Кунĕн çĕрĕн салат авăраť,
Çухри*) халăх асанаť.
Хĕрлĕ çыран сылтам йенпе
Шур тăпраллă уй выртаť,
Çултан çулах Сухатўпе
Уйан йађĕ асланаť.
Пуçтарăнаççĕ пур йенђен
Сухатўне çулленех:
Çимĕк ерни иртиђђен
Йупкун ватти вĕттипех.

Кĕрнеклĕ йаш кĕрĕмсемшĕн
Аслă уйав Сухатў:
Вайла пухă ваттисемшĕн,
Карђăксемшĕн калаçу.



Ђăвашсен аслă поеђĕ Н. Шупуç-çынни Вăл литтературă ĕçне ĕçлеме тытăнни кăçал 20 çул çитет.

*) «Сунталăн» пĕлтĕрхи 7, 8, 11 тата 12-мĕш №-ĕсене пăх.

*) Çывăхри.




Ђаплă çăварни кăмăлĕшĕн пĕтĕм тĕнђе саванаť. Çута хĕвел вĕтђеç йалтăрккисене шура йур çине сапалаť. Ăша çил хуралта çинђи йура шаратса, йăрăм шăрçа пек, тумла йухтараť. Салакайаксем «ђвилт, ђвилт» йурласа, сиккелесе çўреççĕ. Ађапăђасем иртенпех ту айккинђе çуйăхаççĕ. Асла урамра купи купипе хĕрсемпе кађђăсем тарса тухнă. Пурте вĕсем вĕçкĕн çăварнине йурасшăн ђи лайăх тумтир таханнă. Кађђăсем, сарă кĕрĕке, йĕтĕн çиппинђен тĕртсе тунă шăрђђануй пиçихипе çыхнă, нумайĕшĕ урисене ђуссăнка каçата таханнă. Хĕрсем, хĕл кунĕ пулсан та, çўхе пурçăн йе пусма тутăр çыхнă, урисене кĕске кунђалла каçата йе çăм калуш таханнă.

Йал çĕмĕрĕлет. Ўсĕр çынсем йурласа, урлă-пирлĕ тайкаланса çўреççĕ. Хĕрсем те, çавăнтах, çăварни йуррине шăрантараççĕ. Шанкăрав сасси иртенпех пĕр ђаранмасăр йантараť: катађђи ђупаççĕ.

Пайан пурте саванаççĕ, пĕр Иђук анђах хĕрсем хушшинђе йупа пек шавламасăр тăраť. Йавăр шухăша кайнă вăл. Унăн йулташĕсем шавлаççĕ, хĕрсемпе выђаççĕ. Иђукăн та выђас килет, анђах ăна ђаплă кађђăсем йуратмаççĕ. Паçăр та вĕсем, Иђука курсан: — «Хаçат писсăрĕ килђĕ, çул парăр» — тесе кулђĕç.

Иђук ђухăн çын ађи. Вăл йалти ирсĕр ĕçе йаланах хаçат урла кăтартса параť, çавăншăн ăна йалти куштансемпе кулаксем курăймаççĕ, тем те пĕр каласа măшкăлаççĕ. Иђук вĕсенђен харамасť, анђах пур ађасем те ун çинђĕн кулнă пирки, вăл: хĕрсем те ман çинђен кулаççĕ пулĕ тесе, хĕрсенђен вăтанаť. Халĕ те авă ађапђасем урамра Иђука курсан: — «ав йала сутакан!» тесе кашкăраççĕ. Çакăн пек сăмахсем Иђук ђĕрине ыраттараççĕ, анђах хай тĕрĕссине кура вăл ђăсах лăплатаť.

— Вахăт çитсен пĕлĕç ха ман ĕçе те, вăра урăхла хисеп тавăçĕ, тет вăл.

Пайан, аслă урама çăварни курма мар, Уђука курасшăн анђĕ вăл. Çаврака питлĕ, хура куçла Уђук çине Иђук пĕр куçне илмесĕр пăхаť. Йуратнă хĕрĕшĕн вăл












Çĕр çитмен пирки ђăвашсем хушшинђе тĕрлĕрен алăсти ĕçсем йышлăланса пыраççĕ. Çавăн пиркийĕх ђăвашсем Çĕпĕре куçаççĕ, пысăк хуласенђи фапрăк-савăтсене ĕçлеме кĕреççĕ. Каргтин çинђе çӳлте, сылтăм йенђе—1)Тир тăвакан, 2] Ун çумĕнђе—Йетинствă сĕтел-пукан фапрăкĕнђи рапођђисем туса пĕтернĕ пукансене улăмпа ђĕркеççĕ, 3] Ун айĕнђе, иккĕмĕш ретре—çăматă тăвакансем, 4) Иккĕмĕш ретрех, сылтăм йенђе—Çĕперти Çилинă йатлă ђăваш йалĕнђи (Кемер районĕ, Куçнетски окрăгĕ) електритсă станси ăшĕ. 5) Айалта—ђулçурт тăвакансем.

Хӗрӗх ҫухрӑм йӗри тавра
Сухатӑне пӗлеҫҫӗ;
Хатӗрленсе, ҫине тӑра,
Ушкӑн-ушкӑн килеҫҫӗ.
Каҫҫи пырать хӗр пӑхмашкӑн,
Хӗрӗ пырать пӑхтарма,
Иртни ҫинҫен асӑнмашкӑн
Ват ӳркенмест пухӑнма.
Унтах тата майӗ те пур:
Ҫурла ҫава туйанма,
Ким таварӗ карҫӑксемшӗн,
Хӗрлӗ пусма хӗрсемшӗн.
Анҫах нимрен те пахарах
Утсемпеле ӑмӑртни,
Йулашкинҫен каҫаларах
Пӗрле ӗҫме саланни.
Кӑҫал вӑйла ҫур килнипе
Ыраш ӳсет пӗр тикӗс,
Ҫуртри каҫҫи ав майӗпе
Шӑтса тухрӗ сипсимӗс.
Ҫаванпа та Сухатӑне
Аслӑ пулма шанаҫҫӗ.
Ҫывӑхрисем унӑн йатне
Пур те сӑра тӑваҫҫӗ.
Урхан арӑмӗ Унерпи,
Упӑшки ҫук пулин те,
Сара турӗ нӳхреп тулли,
Хатӗрлерӗ ерех те.
Сухатӑне йама тесе
Хатӗрлерӗ ҫӗкеҫне,—
Тантӑшсемпе пӗр пек тесе
Ҫӗлеттерҫӗ шупӑрне.
Уланкине тутарттарҫӗ
Шӑрҫа пуҫлӑ ҫапата,
Йарҫӑк вӗҫне йартарттарҫӗ
Шултра шурӑ нухрата.
—„Тантӑшсемпе пӗрле ҫӳре,
Тӳлек, лӑпкӑ, ҫипер пул;
Каҫҫӑ тавра шӗ - ҫӗмере.
Калаҫасран кайа йул.
Пӑхассине пӑхсассӑн та,
Паллашасса ан васка,
Йаш кӑмӑлна кайсассӑн та
Сӑмах ытла ан вакла.“
Ҫамрӑк хӗрне тимле, тимле
Ӑс вӗрентрӗ Унерпи.
Сухатӑне хӗрпе пӗрле
Карӗ ҫура Силемпи.

Ак Сухатӑ кӗрлет вӗҫи-хӗррисӗр,
Тапса тулпӑ халӑх етем тирпейсӗр:
Ту йенҫи вирйал анат йенҫине
Пӗрлешнӗ пӗр ҫӗре уйав йаҫӗпе.
Ункӑ урлӑ килнӗ Таран хӗрарӗ,
Ҫавал ҫинҫен килнӗ Шуртан капӑрӗ,
Йӗршшӳ тӑрӑх ларнӑ пӗҫӗк йалсенҫен
Килнӗ пулас пӗрер ҫын кашни килӗрен.
Сившу хӗрсем ҫитрӗҫ уйрӑм пӗр ушкӑн,
Куҫ тулли илемлӗ курса тӑмашкӑн,
Пуринҫен те аҫашрах ҫӗкеҫ куранать,
Пур каҫҫӑн та куҫӗ ӑна асӑрхать.
Ушкӑн, ушкӑн, хӗр ушкӑнӗ—
Шур хур ушкӑн йевӗрлӗ,
Йӗшкӗн каҫҫӑн вӗт ушкӑнӗ
Ҫулти хӑлат манерлӗ.
Пӗве ҫитнӗ сарӑ хӗрсем
Тутисене мӑрт тытнӑ.
Ара ҫитнӗ йаш аҫисем
Аллисене кукӑртнӑ.
Каҫҫӑ тени хӗр ушкӑнне
Ватанмасӑр ҫулӑхать,
Хӗрӗсен те ун пек ҫухне
Кӑмӑл тулса улӑхать.
Маттур, йӳрӗк йаш каҫҫӑсем
Йурла, йурла ҫӳреҫҫӗ.
Сухатӑне килнӗ ҫынсем
Тӑнла, тӑнла итлеҫҫӗ.
Пуринҫен те хыт йантраҫҫӗ
Шуртан капӑр каҫҫисем.

---

тем тума та хатӗр. Лаша кӳлсе Уҫука катаҫҫи ҫуптарма ҫав тери кӑмӑлӗ пур ун, анҫах калама именет. Ҫитменнине Уҫук хыҫҫӑн Мӗтри ҫӳрет, ахӑр Уҫук Мӗтрийе йуратать пулӗ, тет.

— Пире катаҫҫи ҫуптаракан та ҫук, шанса тӑр ҫынсем ҫупнине курса, — терӗ Уҫук хайӗн тантӑшсене. Ватанкаласа Иҫук Уҫук умне пыҫӗ те:

— Епӗ ҫуптарӑп, лаша кӳлсе анами? — терӗ.

— Ҫуптаракан пулсан ма ҫупас мар, кӑмӑлу пулсан кӳлсе ан, Иҫук!

Иҫук лашине кӳлсе анҫӗ, унтан Уҫукпа Праскине лартрӗ те вӗҫтерҫӗ лашине урампа. Ҫун савни Уҫук ҫумӗнҫе Иҫукӑн ҫӗри кӑлт-кӑлт сикет, тем пек вӑл унпа калаҫасшӑн, анҫах каллех именет. Лаша пуҫне силлесе йуртапа ҫупать. Пӗкӗ ҫинҫи шӑнкӑрав ҫин, ҫин, ҫин», йантарать, ҫерене пушшех таптарать.

Уҫукпа Праски те ытти ҫынсемпе пӗрле ҫаварни йуррине йурлама тытӑнҫӗҫӗ:

Ҫут-тур лаша кӳлсе тухрӑмӑр
Ҫаварни кӑмӑлӗшӗн ҫис туса,
Хамӑр тантӑшсемпе пӗрлешрӗмӗр
Йурлар пӗр пӗринпе савӑнса.
Ҫамрӑк ӗмӗр иртет, савӑнса йул,
Кӗрекене ларах, хӑна пул;
Ҫаварни иртет, тантӑш, ай курса йул,
Савни ҫумне ларса, кӑмӑл ту...

Иҫук, кӑмӑл тулнипе, нимӗн ҫӗнеймесӗр ларса пырать.

— Ей, мӗн ҫывӑрса пыратӑн, пӑр лашӑна, патак ҫийес килетим!

Сасартӑк Мӗтрипе йулташӗсем Иҫук ҫунине ҫаклатса йӑвантарса йаҫӗҫ те ҫил тавӑл пек малалла иртсе кайрӗҫ.

Иҫук, намӑсланса, пӗр ҫӗнмесӗр ҫунине тӑратса лартрӗ те малалла ҫуптарҫӗ. Уҫукпа Праски кулса ҫеҫ пыраҫҫӗ.

— Ҫитӗ Иҫук, шантӑмӑр ӗнтӗ, киле кайса ҫей вӗретсе ӗҫес. Ҫаварни икерҫи хыҫҫӑн ӗҫес килет вӗт, — терӗ Праски. Анса йулҫӗ. — Манӑн, Иҫук, ес киле таврӑнатӑн пулсан, ларсах пырас пулӗ, — терӗ Уҫук.

Иҫук килелле вӗҫтерҫӗ.

—Иҫук, ес пайан ытла та киҫемӗске? — терӗ Уҫук пӗҫҫенех йулсан.

— Еп йаланах ҫапла, Уҫук. Пайан тата Мӗтри мӑшкӑл турӗ, ҫунана йӑвантарса йаҫӗ.

— Усалӑн ӗҫӗ мӗн тата? Лаша йантӑ, ашшӗ мулӗ хӳттинҫе ҫӑмӑлӗҫке пурӑнма!

Иҫук хӗпӗртесех кайрӗ. Вара Уҫук Мӗтрийе йуратмасть пулать ха, йуратсассӑн ҫак сӑмахсене каламӗҫҫӗ — тесе шухӑшласа илҫӗ.

Вӗсене шет асӑрхаççӗ
Сившу сарӑ хӗрӗсем.
Шуртан кађђи ушкӑнӗнђе
Виçӗ кађђӑ пит маттур;
Вӗсен пиђӗ куçӗсенђе
Атӑл хумӗн тӗсӗ пур:
Виççӗшӗ те çырӑ çынсем,
Кӑвак куçсем кӑвар пек,
Тӑваткӑл пит çӑмартисем,
Ђӗлхи-çӑвар ђепђен пек.
Çанçурӑмсем пит сарлака—
Кӗрнеклетсе тӑраççӗ,
Çийӗ пуçсем таса, йака—
Капӑр тӗслӗ курнаççӗ.
Вӗсен йурри — Атӑл çилӗ,
Кӗрле кӗрле йантратаĭ,
Сӑмаххисем питӗ вирлӗ,
Пур халӑха çавӑраĭ.
„Вуник йуман пӗр кутран,
Тӑрри перӗннӗ пӗлӗте;
Епӗр виççӗн пӗр таван,
Мӑн Йентимӗр пирӗн атте“.
„Атте йађӗ Атӑлта—
Иртен çӳрен асӑнаĭ;
Анне йађӗ Çавалта—
Ырçын пыраĭ, ыр çунаĭ“.
„Утмӑл тантӑш—ывӑл тантӑш,
Йепле ырлӑх курас мар;
Хӗрӗх те пӗр хӗр тантӑш—
Йепле хӗрсе çӳрес мар“.
„Вырӑс кимми вырӑнсӑр
Атӑл тӑрӑх аташаĭ;
Иртмӗ халӗ парӑмсӑр:
Тӑван тухаĭ: тавлашаĭ“,—
„Атте тухаĭ атмапа,
Епӗр виççӗн виçепе,
Утмӑл тантӑш тукшапа,
Хӗрсем çинçе çилӗкпе“*).

*) Çилӗк—кайӑк тытмалли атма.

„Атӑл шывӗ ким çӑтаĭ,
Пирӗн атте пин тытаĭ;
Хуçа тени хуçланаĭ,
Атӑл тӗпне пӑђланаĭ“.
„Пирӗн йура йурӑхсӑр.
Епӗр хамӑр харӑмсӑр,—
Атте пӗрмай хаваласĭ
Хӑвалансен *) тинӗсне“.



Ђӳклеме хатӗрлснеççӗ. („Сарпике“ йатлӑ кино-карттинран).

„Хӑвалӑн тинӗс—хӑйамат,
Пире çитӗ Атӑл та;
Хусан хули касамат,
Пирӗншӗн мар, тутарта“.
„Атте çилли—вут çиçӗм,
Анне кӑмӑлӗ катаппир,

*) Каспий тинӗсне авал Хӑвалан тинӗс тенӗ.

—Итлеха, Иђук, сана йӑвашша кура мӑшкӑлаççӗ! Мӗн ес вӗсене мӑшкӑлаттаратӑн? Епӗ хам та ӑна кура сана шеллетӗп вӗт.



Сасартӑк Мӗтрипе йулташӗсем Иђук çунине çаклатса йӑвантарса йађӗç.

—Ун çинђен калаçма нумай вӑхӑт кирлӗ, Уђук! Йӑваш пирки мар еп вӗсене ђӗнместӗп. Вӑхӑт çитсен хӑйсемех ӳкӗнӗç ха кайарахпа.

Уђуксен килӗ патне персе çитрӗç.

—Анса йуламха,—терӗ Уђук.—Ђей ӗçме кил! Иђук килнелле ђуптарђӗ.

—Ытла та Уђук манпа çемçе калаçаĭ те, хӗр тени вӑл пурте çапла... Ех, Уђук хама йуратсан,—пур çӗр çинђи ђӗрђунран та телейлӗ пулаттам,—тесе шухӑшласа хӑпарђӗ вӑл килнелле.

II.

Ђун ытарайми çӑварни кунӗ сисӗнмерӗ те, каç тӗттӗмӗпе хупланђӗ. Çӑлтӑрсемпе йерӗлђе-уйӑх тӳперен çӑварни çине йулашки хут пӑхаççӗ. Аслӑ урамра туллийех çын, çӑварнине ӑсатаççӗ. Иђук та, Уђука тепре курса пулмӗши тесе, аслӑ урамалла утрӗ.

—Аслӑ урама кайатнам, Иђук? Кил кунта, пӗрле кайӑпӑр!—терӗ Уђук хӑйсен хапхи умӗнђен.

Иђук именкелесе Уђук патне утрӗ.

—Лар ман çумма тенкел çине. Ађапђасем йарӑнма илсе тухнӑ та, кунта прахса хӑварнӑ.

Иђук Уђук çумне ларђӗ. Хӑйӗн ђунӗ, пӗлӗт çине вӗçес пек вӗркешет.

—Пайан çӑварни ытла та илӗртет тулалла, пӳртре пӗр минут та ларас килмест, терӗ Уђук.

— Маншӑн çӑварни савӑнӑçуллах мар, Уђук.

Сухатӳне килнĕçсм
Илсе кайасçĕ пурçăн пир“.
„Пурçăн пирĕ путлантăр,
Пулсан пултар сарă хĕр:
Аттен çилли салантăр,
Анне кăмалĕ çемçелтĕр“.
„Ех, тухрăмар, килтĕмĕр—
Йĕршшӳ çине йĕрлеме:
Суйлас хурас пĕрер хĕр
Анне кинсен хисепне“.
Çапла йурасем йурла йурла
Виçĕ кађђа утаççĕ;
Куçĕ пуçĕсем çынсем урлах
Сар хĕрсене сапаççĕ.

Ак Сухатӳ вĕркет, Сухатӳ кĕрлет,
Пĕтĕм Йĕршшӳ улахĕ йан йантраҭ.
Варман та, хĕвел те итлет, пĕкĕрлет,
Пĕлĕт те ђаранса тапланса тараҭ.
Йашăсем йурлаççĕ, хĕрсем суйлаççĕ,
Пĕтĕм пуххипеле вĕресе çӳреççĕ.
Пуххи йĕри тавра утсем тараççĕ,
Хайсен хастарлахне катартма кĕтеççĕ.
— „Йараççĕ, йараççĕ, утсемпе ђупаççĕ,
Ав йуланутсем шакăр хатĕрленнĕ,
Киремет ђиккинђен ђупма пуçлаççĕ...
Ара, ĕмĕртенпе çавăнта тимленнĕ...“
Тесе халахсем йантратма пуçларĕç,
Пур те тавалла куçмашкăн тапратрĕç.

Мăн Йентимĕр ывăлĕсем тухрĕç уйалла,
Лашасен картине, утсене утланма:
— „Сухатӳне килнĕ пек ђух пĕре ђуптарас,
Пухха йĕри тавра ăмартса кустарас“ —
Тесе калаҭ пиђĕшне ватам ывăлĕ,
Аталпала Çавал çинђи утаманăн ывăлĕ.
—„Йеркиней, асту, айăр ытла хастар,
Çаварлăхпа касмăкласа мĕн пур вайпа кастар,“
Тет пиђђĕшĕ шăлнине, ватаммине,
Хай йулаҭ кӳмме кутне тепĕр шăлнипе.

Йеркиней йĕтĕм хура ута утланђĕ,
Йĕнерлесе касмăкласа утланђĕ,
Карантарђĕ ђĕлпĕре, тапăрларĕ урипе,
Тапса сикрĕ айăрĕ çил çунатлă йурттипе.

Ак, утсемпе кустараççĕ пусăра
Пĕр ал йулан йунашарăн тапранса;
Çывхараççĕ пухă патне сиккипе —



Сулахай йенђе „Сарпике“ йатлă кино-карттинра Сарпикене выђакан ђăваш хĕрарăмĕ Тани Йун. Ун çумĕнђе вырăс арттистки Шереметйевă. („Сарпике“ кино-карттининђен).

Çаврăнмалла пухă тавра авалхисен йăлипе,
Вара тинех кăмсармалла парне патне алсене.
Йăлтти-йалтти йулансем,
Ыткăнаççĕ уђĕсем.
Ула лаша ђан малта —
Пĕђĕк ађа йуланта.
Ун çумĕнђех, кайарах,
Вĕçсе пыраҭ Йеркиней,

---

— Ĕнтĕ ес çак кунсенђе йаланах пуçна ђиксе çӳретĕн, пĕр пĕр хĕр пуçна çавармарĕ ĕнтĕ? — тет Уђук кулса.

— Мана, йала „сутакан“ çынна, мĕнле хĕр йуратĕ, ав Мĕтри пеккисене йуратаççĕ вĕсем!

— Сана, йаваш кăмаллă çынна та йуратмасан, кама йуратмалла тата?

— Мĕтри йепле куштан та, ăна йуратаççĕске! Пуйан çын ывăлĕ çавă вăл.

— Çав шатра питлĕ куштана ырă хĕр йуратĕши вара?

— Ан кала, Уђук, ху та Мĕтрипе çӳрекелетĕн вĕт!

— Мана пурте Мĕтри çумне çыпăçтараççĕ. Епĕ ăна ватă хĕр пулса йулсан та йуратас çук, вăл хай куршанкă пек ман çумма çыпçăнаҭ.

— Çиленмĕне, Уђук? Епĕ сана ђĕререн пĕрикĕ самах каласшăн.

Уђук тахçанах çакна кĕтет, сисет вăл мĕншĕн Иђук киђем çӳренине. Анђах сăмахпа калама Иђук ватанаҭ, —тесе шухăшлаҭђĕ вăл хай ăшĕнђе.

— Калас сăмахна кала, Иђук, еп итлетĕп—терĕ кĕскен.

— Мана курайманççĕ, йалта ирсĕр ĕçсене каларса панăшан „йала сутакан“,—теççĕ мана куштансем. Хашĕ пĕри ăнланайманнипе, йе куштансенђен хăранипе ман çине тăраççĕ. Есĕ те, Уђук, ман çинђен çапла шухăшлатăн пулĕ?

— Вара епĕ те, Иђук, сан ăшману пулса тăратăп? Епĕ хĕрарăм пулсан та шурăпа хурана уйаратăп. Виçĕ çул шкула çӳренине харама йамарăм, пуçă вăхатра епĕ те кĕнекесем вулатăп. Çакна кăна каласшанђђи?

— Тата та каласшăн. Ман ђĕре çунаҭ... Уђук!.. Санпа пĕрре курса калаçнăшăн епĕ тем тума та хатĕр... Сана йуратнипе епĕ нимĕн пĕлмесĕр çӳретĕп... Ан çилен ĕнте мана, — терĕ Иђук. Сасси ђĕтĕрет.

Уђук ватанна пек пулса пуçне ђикрĕ.

— Кĕђухне, Иђук, ĕненме йавар, пурте улталасшăн май шыраççĕ—терĕ.

— Ĕненсем мана, Уђук!.. Мĕн пур шухăшăм та сан çинђе анђах—терĕ Иђук вĕриленсе.

Ђатайманнипе Уђука ыталаса илђĕ кăна:

— Ха-ха ха! Икĕ кĕрт йатти туслашаççĕ!—тесе кăшкарса йађĕ сасартак Мĕтри пӳрт айккинђен тухса.

— Мĕн кирлĕ сана, йал çаханĕ!—терĕ Иђук Мĕтри умне тăрса. Мĕтри пилĕк крепенккелĕ пукан катартрĕ те:

— Кăна есĕ куратна?—терĕ Иђука.

Унђђен те пулмарĕ, иккĕн Иђука йарса та илђĕçĕ. Уђук хăранипе кăшкарса аран аран карташне тарса кĕђĕ.

— Лекрĕнем пирĕн алла! Тек ĕнтĕ хаçата çирайман, Уђукпа та саванса ларайман, — терĕ те, Мĕтри вай çитнĕ таран, Иђука пуканпа ђишрĕ.

Ђӑмӑрккапа пӗрмайах
Хистет хайӗн айрине.
Ӑйри хытӑ ытканӑт̆,
Самси-ҫӑвар вут тӑкат̆,
Ҫапах ула лашаран
Ик шит йулат̆ сахалтан.
Ун ҫумӗнђех тепӗр ут
Кӗҫ иртес пек туйӑнат̆:
Хушка пуҫлӑ ҫӳрен ут
Маттур йулан тыткалат̆.

Ӑмӑртаҫҫӗ йулансем,
Урса кайна темелле:
Шийи-шай! Йай-йай! сасӑсем
Атал хӗрне ҫитмелле.
Курса тӑран ҫынсен те
Ӑшђиккисем вӗҫнӗ пек.
— «Ай та уй!» та—«ак ӗнтӗ!»
Тӗлӗнеҫҫӗ тӗлӗк пек.

Пуринђен те ытларах
Йашкӗрӗмсем хавасрах:
—„Ула лаша камӑн ку?
Йепле унӑн кустару?"
—«Хура айӑр тухатех,
Йаш утаман йулмастех»,—
Теҫҫӗ Шуртан кађђисем,
Ҫавал ҫинђен килнисем.
—«Хушка пуҫлӑ ҫӳрен ут
Иртме тӑђӗ икӗ хут,
Ђикке малтан ҫитетех,
Урха йатне ҫӗртместех»...
Теҫҫӗ пӑхса тарансем,
Сившу йенђен килнисем...

Анђах ула лашана
Ҫитеймерӗҫ нихӑште,
Суха тунӑ лашана
Сума сурӗҫ пуххипе:
Пурҫан вӗҫлӗ алшали,
Икӗ сурпан ик йенђен—
Парне ҫакрӗҫ пӳ тулли
Ула лаша ҫилхинђен.
Ђӑтаймарӗ Йеркиней
Ула лаша пусмӑрне:
—«Пулсан пултӑр ман телей,
Хакне парап хамӑнне,
Вырӑс ылтӑм укҫине» —
Тесе вала тапӑнђӗ
Ула лаша хуҫине.
Мула пулин уйрӑлђӗ
Ула утран Патерек —
Ҫӳлти касри Туйтерек.
Виҫӗ таван савӑнђӗ
Ку лашашӑн темӗн пек.
Анђах хушка лашалли,
Йӗркинейрен йулманни,
Пӗрре пӑхрӗ ӑмсанђӗ,
Тепре пӑхрӗ тӑванђӗ:
—«Урха пулнӑ пулсассӑн
Ула лаша пирӗнђӗ» —
Ӳпкелешрӗ Уланки,
Урха уђӗн хуралҫи.
Халӑх ҫӑварӗ уй хапхи,
Темӗн те пӗр самаххи:
—„Лаша хуҫи утаман,
Патерекӗн вӑл пулман.
Йури йана ађана
Ула утпа Йеркиней;
Ђапӗ малтан лашана,
Ҫавах йӗкете телей..."
Ватти-вӗтти самахлат̆,
Карђак-кӗрђӗк калаҫат̆,
Йур йурлаҫҫӗ йашӑсем,
Кӗвӗлеҫҫӗ кӗслеҫсем:
«Йӗршӳ йухат̆ йӗрленсе,
Ҫавал ҫине ҫавранса,
Ђӗнтӗр кӗпер ђант! taват̆—
Урла ула ут каҫат̆».
«Улӑх кайакӗ текерлек,
Сухатире Патерек,
Ӑмӑрт кайӑк Атӑлта
Йеркиней тус Ҫавалта».
Сившу ҫынӗ Ҫиментей,
Урхан ђаплӑ кӗслеҫи,
Шапӑрпала Мулентей —
Хайсен йалне манаҫҫи:
«Ҫӳлти ҫалтӑр—шурӑмпуҫ
Хӗвел умӗн хӑпарат̆.
Хушка ута тавтапуҫ—
Сившу йатне вӑл сарат̆».
«Урха тарҫи Уланки,
Йавар ута шӑм-шакки;
Хушка лаша ҫӗр ђават̆,
Хуҫа ҫукшӑн куђанат̆».
Ҫапла йурӑ йурлаҫҫӗ,
Лашасене мухтаҫҫӗ,
Пуринђен те ытларах,
Йеркинейӗх ђапларах.
Йеркинейе курасшӑн
Пӗтӗм пухӑ хумханат̆:
Ӑна пурте палласшӑн,
Сухатупе асӑнат̆.
Пирӗн Ђекеҫ ђипер хӗр
Силемпине тапӑннӑ,
Мӗнле шухӑш кӗнӗ тӗр,
Хай ђурине уртаннӑ:
«Паллаштарха, кинемей,
Утаманӑн ывӑлпе,
Ытла маттур Йеркиней,
Йепле ђӗнем ђӗлхемпе?»
—«Ес ухмаха йертӗни?
Апу ӑсне мантӑни?
Ара пухӑ варринђех
Намӑс куран ђиперех» —
Ӳпкелешет Силемпи
Урха хӗрне Ђекеҫе,
Хай систерђӗ пӳрнипе
Ҫиментейе-кӗслеҫе.
Ҫиментейӗ кӗслере,
Тути-ҫӑварӗ сӑвара,

---



Хӗнесе Иђука ђӗпђӗрӗ йун турӗҫӗ.

Виҫҫӗн хӗнесе Иђука ђӗп ђӗрӗ йун турӗҫӗ.

— Есӗ те кунтаи?.. Мӗн турам епӗ сана?—терӗ Иђук ђун хавалӗпе Пађук йатлӑ йулташне палласа. Унтан ҫӗр ҫине йаванса кайса тӑнсӑр пулђӗ.

Ҫута уйах пӗлӗт айне пытанђӗ. Ҫаварни илемне йунпа варланашӑн пашархание пулас. Ҫурҫӗр йенђен сивӗ ҫил вӗре пуҫларӗ, ахар тата йун ан тӑкӑнтӑр тесе ҫынсене урамран хӑвалат̆. Ҫынсем саланђӗҫ. Ђӗпђӗр йунлӑ Иђука тертленсе Уђук пӳрте сӗтӗрсе кӗђӗ. Хавӑртрах, ашшӗ-амӑшӗ ӗҫкӗрен тавранићђен, Иђукӑн суранӗсене ҫурӗ те, ђупрӗ урампа ун амӑшне пӗлтерме. Ҫӗр варринђех амӑшӗпе пӗрле лаша кӳлсе Иђука пулнитсана илсе карӗҫӗ. Ҫул ҫинђе тин Иђук тӑна кӗђӗ.

— Есӗн Уђук? — тӗрӗ вӑл йаварран сывласа илнӗ хыҫҫӑн.

— Епӗ, Иђук! Ӗнтӗ каҫар мана, епӗ айӑплӑ сан умӑнта санран карташне тарса кӗнӗшӗн, — терӗ Уђук куҫҫуђӗпе макӑрса.

— Сан ҫумӑнта, Уђук, епӗ ыратнине те пӗлместӗп. Ытла та аван ӗҫке санпала ҫак ҫут тӗнђере пурӑнма — терӗ те, Иђук каллех тӑнне ҫухатрӗ.

Ташмансем Иђука амантса пӗтернӗ пулсан та, вӑл икӗ ернерен сывалђӗ. Мӗтрипе йулташӗсем Иђукӑн кунҫулне таттймарӗҫӗ, хӑйсен пуҫӗсене ҫирӗҫӗ. Хаҫат ҫырусне хӗненӗшӗн вӗсене ђасах йалйышсенђен уйӑрђӗҫ.

Уђук Иђука халиђђен те пулин ђунтан вартан йуратат̆. Иђук ӗлӗкхи пекех тӑрӑшса, йалти ирсӗр ӗҫсене хаҫат урлӑ тасатат̆. Вӑл халӗ ӗнтӗ пӗђђен мар, унпа пӗрле тата виҫӗ ҫамрӑк ӗҫлеҫҫӗ.

— Йепле йавӑр пулсан та, майӗпе йалӑн тӗттӗмлӗхне сирӗпӗрех ха! — тесе ӗмӗтленеҫҫӗ вӗсем.

**Ваҫҫа.**

Ăсталăхĕ пўрнере,
Хастарлăхĕ йурăра:
«Атăл сарђĕ сĕвек мар,
Сĕве шывĕн хĕрри мар;
Йаш утаман Урха мар,
Воййевотăн тусĕ мар».
«Сухатире сулхăн ҫук,
Пирĕн умра Урха ҫук, —
Йĕршшў йĕрет йĕрмеллех,
Улахĕ ҫук темеллех».
«Халат килђĕ—хăратрĕ,
Ђăх ђĕпсене салатрĕ.
Тăхта халĕ ăмăртма,
Ăмарт кайăк пулмăнха.»
«Шура хула Шупашкар,
Вырăссемшĕн, пирĕншĕн мар.
Хусан хули ђул хўме,
Улпуђĕсем ђун ҫиме».
«Урха улпут Хусанта
Майра патша патĕнђе:
Савăнăҫлă саманта
Урха йађĕ — ҫут тĕнђе».
Ђĕкеҫ итлет тимлесе
Ҫиментейĕн сăввине,
Силемпине хĕрелсе
Ҫапах туртаҭ ҫаннине:
—«Ех, кинемей, кинемей,
Пĕрик самах пуплехе, —
Ытла йĕкĕт Йеркиней,
Ĕнтĕ ан та хирĕҫхе!»
— «Ей, ђĕмере ку хĕре,
Ара кађђă курмани?
Йĕри тавра йĕркере
Вирйал ађи сахали?»
Тесе ђараҭ Силемпи
Ђĕкеҫ хĕре тилмĕрсе,
Пĕтĕм пĕђĕк пĕвĕпе
Хăй утрĕ пухха хирсе:
—«Ак пуҫланĕ кĕрешў,
Йаш кĕрĕмшĕн килĕшў,
Утаман уђ (ывăлĕ) ҫĕнтерсен
Паллаштарăп май килсен».
Ђура ҫапла каласа
Лаплантарђĕ Ђĕкеҫе,
Йеркинейе хурласа
Сурса илђĕ темиҫе.

*(Малалла пулаҭ).*





## Ҫамрăк ăстаҫă.

Шупашкарти Комун шкулĕнђе пурăнакан тăлăх ађа Иван Ҫеменђ Ҫеменăв. Вăл Шупашкар уйесĕн. Тутаркас вул., Йаплани йалĕнђи ђухăн ђăваш хресђен ађи. Хăй тĕллĕнех, хăйĕссĕн (пăспа) ĕҫлекен пĕђĕк машшинă (кўлепи) тума вĕреннĕ. Ҫутĕҫ Комиссариатĕн ăна малалла техникĕ шкулне вĕренме йама тăрăшмалла. Ўкерђĕк ҫинђе, сулахай йенђе, И. Ҫеменăв тупă машшинă.

# ҪИЛТĂВĂЛ (Ревоԓутси).

Этот день был небесным громом.
Сотрясением твердынь.
**И. Уткин.**

Кăш-кăш-кăш-ш!—кашлаҭ
Сĕм хура вăрман,
Ҫўҫпуҫне тăмалаҭ
Ҫĕр ҫулхи йуман:
Тăвăл ҫĕкленет —
Сисет манан ђун,
Калт-калтах сикет —
Вĕрет вĕри йун...
Хăлтăртатрĕҫке ҫанталăк урапи,
Кусса кайрĕ вăл уйхирсем тарăх...
Пĕшкĕнсе илет есрел хурами,
Шартлатаҭ кăна хăрăк туратти.
— Шартлатах, хуҫăл. Кăклансах ывтăн!
Ак ĕмĕт, шухăш — тăвăл ҫунатти
Шартах ҫапса хуҫрĕ те, — хайаррăн
Вакласа ыватрĕ самана каштине.
Ҫанталăк урпа хађ, тустараҭ тĕнђепе.
Кăш-кăш-кăш-ш! — кашлаҭ
Сĕм хура вăрман,
Сўҫенсе лараҭ
Мĕн пур пек йуман:
— Тăвăл ак ҫĕкленђĕ.
Ҫĕкленђĕ тусан;
Те вут, тем тивертнĕ?—
Тĕттĕм... ҫил ҫунаҭ.
Ҫитрĕ те ҫапрĕ, ҫĕкленђĕ хайарлăх!
Тăвăл урапи ҫиҫсе ҫиттĕрĕ...
Пытанаймăн есĕ текех харамлăх,
Тăвăлпа есрел тытăҫса ўкрĕҫĕ.
Кисренет тĕнђе, ҫĕмĕрлет, пăтранаҭ,
Хурама тĕлĕнђе тем ђăлт-ђăлт!—ҫутăлаҭ.
Кĕр-рĕс!—кĕрĕслетрĕ типнĕ тар пиђки,
Лаштах персе анђĕ хĕнхур хурами.
Ҫулăм ҫулса илђĕ есрелĕн тымарне—
Пĕрхĕнђĕ ҫиҫĕмĕн вут хĕмлĕ йĕппи.
Пĕрђĕн пĕрђĕнех ҫитсе сăхрĕ вăл
Ђĕренђеллĕ пўрт-ҫуртсем ђĕрине.
Кăш-кăш-кăш-ш!—кашлаҭ
Сĕм хура вăрман
Ҫипуҫне шăлаҭ;
Хай патвар йуман.
— Илĕрсем, пĕлĕр,
Хунав йумансем,
Ђухласа илĕр
Тăвăл йумахне.
Тăвăл ку ҫуралђĕ хула хушшинђе.
(Илтмен мар епĕр мăрйе сассине—
Темиҫе тапхăр та вăл ђĕнђĕ тăвăла).
Тарпала ĕҫ ĕмкĕђне—ҫав сасса ĕмсе
Ҫитĕнђĕ тăвăл хĕнхур айĕнђе.
Акă ун парни, куратпăр пурте:
Сиксе туххарĕ паттăр йуланут.
Тараст!—та, тăраст!—пусаҭ уђĕ-урхамах.
Ҫилхере йалав:— **ҫурла-мăлатук**,
**«Ирĕк»** йатлă вăл, ҫак ут-урхамах.
Вăшăл вăшш! Вăш-вăш-ш!—
Вăрман вăшлатаҭ,
Тăвăл ађине ирĕке ђĕнет.

**Шаланкă.**

# ЕÇ ЙУРРИ.

Вăхăтлă.

Ç. М. Максимăв кармонилепĕ.



Тыррисене вырăççĕ, йурлакан çук,
Ий-йай-йу! — йурлакан çук.
Аҫăр хамăр йурласа вырари?

Аслати те аватаҫ, çиçĕм çиçет,
Ий-йай-йу! — çиçĕм çиçет,
Аслатин шур лашисем кĕçетет.

Тавранас вăхăтра тавранмасан,
Ий-йай-йу! — тавранмасан,
Пире атте анне те çилленет.

Пĕҫĕкçеççĕ те пахҫа, йешĕл сухан,
Ий-йай-йу! — йешĕл сухан,
Илемл(ĕ) иккен йешĕл те вăхăтра

Çинçейех те пĕвĕм, хура куçăм,
Ий-йай-йу! — хура куçăм,
Илемл(ĕ) иккен çамрăк вăхăтра.

Ку йурра çамрăксем кĕршсе тыр вырнă ҫух йурлаççĕ. А. В. Ваççилйсв (Пўркел йалĕ, Пăва уйесĕ) йурласа панă.

Хорпа йурланă ҫухте 1 тон, йе $1^{1}/_{2}$ тон çÿлерех йурлама пураҫ.

# ҪĂВАШ ЙУРРИ.

Ҫăваш халăхĕн йура пит нумай. Аҫаран пуçласа ватта çитиҫҫенех ҫăваш çынни йурапа йапанаҫ, савăнаҫ. Йурăра унан хуйхи-суйхи те, савăнăçĕ те, тĕнҫепурăнăç çинҫен шухăшлани шухăшĕсем те. Пурнăçĕнҫе йăвăр вăхăтсем пулсан, вăл йурăпа кăмăлне пусараҫ, савăнăç пулсан — йурăпа ҫунне хăпартаҫ, вăй илет.

### Мĕнле тĕрлĕ йурăсем пур?

Йара çулталăк хушши ҫăваш йалĕнҫе йура илтĕнет, йанăраҫ. Çуркунне хĕвел ăшши урамсене, çеремсене типĕтсен, аҫа-пăҫа пăҫă пўртсенҫен уçа, ăша сывлăш çине тухса çеремсем синҫе йурла-йурла выҫăма тытăнаҫ. Вĕсен йурри хăйсен арасна: кĕввисем çăмăл, кĕске, сăввисенҫе тĕрлĕ анланмалла мар, аҫасем хăйсем тупса каларнă сăмахсемпе йатсем тĕл пулаççĕ: вик-вик çути, мал-ути, пи пушман, ҫик-ҫик ҫикĕлти, Синерук, Минерук, Тайухха, Пуйухха, Мармантейĕн кĕлетки, кленҫе касси т. ы. те.

Çур-аки пĕтсен çамрăксем каçпа вăййа пухăнаççĕ, вăййа йуррисем (сăвăсем, уйав йуррисем) йурлаççĕ, выҫаççĕ, ташлаççĕ. Хăш вырăнта вăййа кассăн-кассăн анҫах пухăнаççĕ. Анатри ҫăваш çамракĕсем вăййа ҫапларах, илемлĕрех тăваççĕ. Унта вăййа йалĕне пĕр çĕре пуçтарăнса, урам тăрăх „йухса“ йурласа сав каласа пыраççĕ, хăш вырăнта (Пава уйесĕнҫе „тăхăр йал“ тавраш ĕнҫе) пĕр-пĕр çуллахи праçникре вуласĕпе пĕр çĕре пуçтаранса ҫаплă вăйă тăваççĕ. Вăййа çамраксем анҫах мар, 2—3 çул авланнă мăшăрсем те тухаççĕ.

Ҫăваш хушшинҫе, нумай çĕрте, туйа та çимĕк тавраш ĕнҫе тăваççĕ. (Улйанăвск кĕпĕрнинҫе хĕлле, раштав иртсен тăваççĕ). Ҫăвашра туй йĕркисем нумай, савăнпа, туй йуррисем те пит йышлă. Хĕр туйĕн йуррисем: хĕр йĕрри (хĕр хўхлени), хĕр çуммисен йурри, туй халăх йурри. Каҫҫă туйĕн хăйĕн арасна йурăсем: çамрăксен йуррисем, туй халăх йуррисем. Икĕ туй хĕр килĕнҫе пĕрле пулсан тата арасна йурăсем пур: çамрăксен такмакĕсем (кунта икĕ йенĕсем пĕр пĕрне мăшкăласа йурлаççĕ), хĕре хĕве хупнă ҫух, хĕр йапалисене кăларнă ҫух, хĕре илсе кайнă ҫух йурлакан йурăсем пур. Туй иртсен çĕнĕ хăтасем патне хăнана çÿренĕ ҫух „çĕнĕ хăта йурри“ йурлаççĕ.

Çуллахи пуш вăхăт ҫас иртет. Акă çĕртме тума тухмалла, унтан вара хĕллене çитиҫҫенех хресҫен çынни пĕр канмасăр ĕçлет. Ку вăхăта йура ҫаранаҫ, анҫах ҫарансан та хутран-ситрен илтĕнетех: выртмара йурлаççĕ, ерттелпе тыра вырнă ҫухне (нимепе, йе çамрăксем кĕрĕшсе вырнă ҫух), ĕç йăвăр пулсан та йурасăр иртмест; çуллахи праçниксенҫе те йура илтĕнкелет.

Кĕркунне пулђĕ. Тырăсене пуçтарнă. Ђăваш ĕççынни, ĕçе ирттерсе тырра пуçтарнă май, çĕнĕ тыраран сăра туса хурăнташĕсене пуçтарса ĕçкĕ-çикĕ тăвас тет. Пĕр йурăра çак авалхи йала çинђен çапла каланă:

Урпаш уйне урпа акрăм
Йерипе.
Шăпăр-шăпăр çумăр çурĕ
Йерипе.
Çумăр хыççăн хĕвел пахрĕ,*)
Симĕс калђа шăтса тухрĕ.
Урпа пулђĕ пулмалла,
Пулса çитрĕ, вырмалла;
Хăмађ пулђĕ хамăш пек,
Пĕрђи пулђĕ тырçа пек...

Утрăм, утрăм йăран тăрăх,—
Пулса çитнĕ — вырас терĕм.
Выртăм, выртăм васкамасăр,
Вырса пĕтсен çапас терĕм.

Хуриташ семпе хушăнатпăр,
Хăна ђĕнме хатĕрлерĕм.
Виç пĕрђĕрен салат турăм,
Çавăр тÿпичђе шÿтертĕм,
Пуç тÿпинђе типĕтрĕм,
Ал-арманпе авăртрăм.
Сăра турăм, йÿçĕтрĕм,
Тухса тарат̆ пиђкерен.
Çиђе йалтан ђĕпес терĕм,
Виç кунĕпех ĕçес терĕм.

Пуçтаранђĕç хăнасем,
Пĕђĕк пÿрт те тулат̆ке.

Кĭвак сухал вăтă çынĕ
Мăн çăкăрне тыткалат̆,
Йĕрке тават̆ таткалат̆,
Йĕркипелех активтерет.
Сăра курки шăкăртатат̆,
Курман çынна паллаштарат̆.
Ђăваш çынни ĕлĕкренпех
Ĕç пуçтарсан ĕçкĕ ĕçет.

Йурлаççĕçке хĕрсе çитсен,
Ташлаççĕçке туртмасарах,
Тĕпел кукри хĕрарăмсем
Йанратаççĕ çĕнĕ йурра.
Такмаксене те пуçлаççĕ,
Куђђенеçне валеçеççĕ.
Вайаçĕ те ывăнат̆ке,
Пиђĕ тăрах тар йухат̆.

Кÿршĕсем те пухăнаççĕ,
Алак панђенех тулаççĕ.
Пĕр пĕрипе паллашаççĕ,
Пĕрле пуранма сăмах
таваççĕ.
Алган алтат̆ тул çуталат̆,
Килнĕ хăна саланат̆.

Пурăнатпăр пурăнăçа,
Пĕр пĕрипе хутăшатпăр,
Çĕр ĕçлесе пуранатпăр,
Хĕлле пулсан канатпăр**).

Ĕçкĕ йуррисем пуринђен нумай. Вĕсен хушшинђе авалхи илемлĕ кĕвĕсем сыхланса йулнисем те пур. Йурласса ĕçкĕ йуррине васкамасăр тăсса йурлаççĕ.

Кĕркунне çите пуçласан, ђăваш ађин пуçне салтака кайас хуйхă пусса тăрат̆. Ниçта та тухса çÿремен, вырăсла пĕлмен ђăваш ађине, ĕлĕк патша вăхăтĕнђе салтак пурнăçĕ пит йавăр пулнă. Çавăнпа та тăван çĕршывĕнђен, ÿсĕ йалĕнђен, тăванĕсенђен, йуратнă хĕрĕнђен уйрăлса кайасси пит йавăртан, йат тухнă ђăваш ађи хурлăхлă салтак йуррисем йурлат̆, хăйĕн пурнăçне ылханат̆, ÿпкелешет:

Ати ывăђ пулиђђен,—
Хăрăк турат пулас мĕн:
Кĕрхи çилпе ÿкес мĕн,
Çурхи шывпа йухас мĕн...

Йат тухнă ађасем прийума кайаççенех сĕм тĕттĕм кĕрхи çĕрсенђе пĕр-пĕрне ыталаса ахлатса йурласа çÿреççĕ. Салтака кайсан, тухса кайађђен йурлакан йурăсем вĕсен тата хурлăхларах илтĕнет, макăрнă пек туйăнат̆...

Ĕç пĕтсен ваттисем ĕçкĕ-çикĕ туса савăнаççĕ. Çамрăксене савăнма сăра-ерех кирлĕ мар. Савнине-варлине курни, уйпала ăшшăн калаçни, пуханса выђăни, кулни, йурлани — ак çамрăксен савăнăçĕ. Çамраксен хĕллехи йуррисенђен пуринђен ытла улах йуррисем. Выранĕ-выранĕпе çамраксем хĕллехи уйавсем таваççĕ: хĕр-сари, сурăх ури, кăшарни. Вал уйавсен пурин те хăйсен арасна йурăсем пур.

Çуркунне çывхарат̆, хĕвел ăшăрах пăхат̆, çурт тăрринђи йур хĕвел ăшшине ђăтаймасăр тумла пулса йухса анат̆. Çаварни çитрĕ. Пулас çуркунне пурне те çĕклентерет. Ватти-вĕтти, çамраксем, çитĕннисем — пурте урама тухса хĕллен йулашки уйавĕпе савăнаççĕ. Ђăваш йуррисем хушшинђе çаварни вађђи хайне арасна йурăсем пур. Вĕсем çăмăл саванаçлă йурасем.

Çак катартнă йурасемсĕр пуçне тата ытти тĕрлĕ йурăсем те ђылай: ђÿк йурри, сĕрен йурри, ака-суха йурри, çынна пытарсан йурлакан йупа йурри. Йалта пĕр-пĕр палла, асанмалла йапала пулсан — ђапла, илемлĕ хĕр хайне-хай вĕлернĕ, упăшкипе арăмне тăванĕ вармăнта вĕлернĕ, ђухан çын илемлĕ хĕрне тутара лашалла сутса йанă, — вĕсем пурте йурра кĕрсе йулаççĕ, çаван пек пулни çинђен çав йурасене йурласа асанаççĕ. Хăш ђухне йура пуçтаракансене пит авалхи йурăсем те тĕл пулаççĕ — Хусана илни çинђен йурлана йура, ĕлĕк йал пуçланнă ђухне пулнисем çинђен йурлакан йурăсем.

Çапла ĕнтĕ ђăвашăн йура пит нумай? Çак катартнă йурăсем, пурте тенĕ пекех, кашни йалта пур. Тĕрлĕ выранти ђăвашсем ку таранђђен питех хутшăнса пуранманнипе, тĕрлĕ выранта тĕрлĕ йура. Пĕр-пĕр йалтан 8-9 çухрăм кайсан та нумай çĕнĕ йурăсем тĕл пулатăн, 20-25 çухрăм кайсан — пĕтĕмпех урăхла йурлаççĕ.

Йура калаçасси халахра нихăçан та ђаранса тăмаст̆. Кашни çул çĕнĕ йурасем тухаççĕ, йурăсен саввисем те, кĕввисем те улшăнса çĕнелсе пыраççĕ. «Çĕнĕ йура çĕнĕ, йурпа килеt», теççĕ йалта. Ђанах та, хĕл ларсан ĕçкĕсем, улахсем пуçланаççĕ, вĕсенђе йура ăстисем хăйсем каларнă, йе урах çерте илтнĕ çĕнĕ йурăсене йурласа катартаççĕ. Йурри кăмăла кайсан, ана вара пурте йурлама тытăнаççĕ. Анђах кивĕ йурăсем те пурте ма наçа тухмаççĕ, вĕсенђен илемлисене аставаççĕ, йурлаççĕ.

Çак каланисене пурне те астусан, ђăваш халăхĕн йура пит нумай тени, ÿстерсе калани пулмаст̆. Йурăсем нумай, вĕсенђе халах илемлĕ кĕвĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр каларнă: унта саванăçлисем те пур, хурлăхлисем, куççÿл калараканнисем те пур.

## Ђăваш йуррисене миçе пуçтарнă.

Ђăваш йуррисем ку таранђђен çак кĕнекесенђе çапăнна:

1) Раттих. Казанская губ. Кунта виçĕ йура, 1 ташă кĕвви пур.

2) «Известия О-ва Археологии, Истории и Этнографии при Казанск. Университете» (1893 г., т. XI, вып. 1, 2, 3, 4.) Кунта вырăс В. А. Мошков салтаксенђен çырнă 70 йура, 5 таша кĕвви çапнă.

3) «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним». Симбирск, 1908 г. Кунта Р. Н. Итопаев, тата Ђĕмпĕрти Ђăваш шкулĕн вĕренекенĕсем пуçтарнă 90 йура çапăннă.

4) «Песни чуваш Ядринского и соседних уездов». Казань, 1908 г. Ку кĕнекене кĕнĕ йурăсен саввисене И. Д. Никитин (Юрки) пуçтарнă. Кĕнеке вĕçĕнђе кĕввине ноѓпа çырнă 3 йура пур.

5) «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним». Ч. II. Симбирск, 1912 г. Ку кĕнекене П. В Пасуххин каларнă, кĕнекере мĕн пурĕ 98 йура.

6) 1915 çулта Хусанта шурпал çумĕнђе С. А. Полетайева çырнă 5 йура тухнă

7) Ф. Павлов. «Сарнай» Шупашкар, 1924 ç. Кĕнекере 36 кармониленĕ халăх йурри.

8) С. М. Максимов. «Ђăваш кĕввисем» 1-мĕш пайĕ. Мускав, 1924 ç. Кĕнекене 102 халăх йурри, тата 27 ташă кĕвви кĕнĕ.

*) Кашни йĕрке хыççăн: „Йерипе".

**) Ку йурра „Сунтал" ретаксине Микита Кĕркури çырса йанă.

9) С. М. Макҫимӑв. «Ђӑваш кӗввисем» 2-мӗш пайӗ. Мускав, 1926 ҫ. Кунта ҫӗнӗ халӑх йурри мӗн пурӗ 17.

Ҫак кӗнекесенђе мӗн пурӗ 423 йура, 34 таша кӗвви ҫапӑннӑ.

Йулашки ҫулсенђе ђӑваш йуррине пуҫтарас ӗҫ саралса пырат̆, йура пуҫтаракансем йышланса пыраҫҫӗ. Ђӑваш ҫӗршывне сӑнакан ушкӑна ҫапма вырӑс Н. С. Йуронев 140 йура йана. Ҫав Ушкӑнах мана кӑҫал йура пуҫтарма йарсан, епӗ Йетернӗ уйесӗнђе 125 йура ҫырса килтӗм, урах ђухне пуҫтарнисемпе манӑн халӗ 200 ытла ҫӗнӗ йура. Тата урах ђаваш компоҫиттӑрӗсен ҫакӑн ђухлӗ ҫӗнӗ йурасем пур: Ф. П. Павловӑн — 175 йурра йахӑн, Т. П. Парамонӑвӑн — 200 йура ытла, М. И. Иђйинӑн — 100 йура ытла, В. П. Воропйовӑн — 40 йура. Кусене пурне те шута илсен, кӗнекесене кӗнисемсӗр пуҫне тата 900 йахан ђаваш йурри хут ҫине ӳкнӗ.

Йура — халӑх пуйанлӑхӗ, ана ҫухатмалла мар, тирпейлесе, пуҫтарса манасран, ҫухаласран сыхламалла. Октапӗр Революци пусмӑрта пуранна вак халахсене варатрӗ, вӗсен култтурлах ӗҫне хаватла маллала йађӗ. Пур вак халӑхсем те халӗ халӑх йуррисене пуҫтараҫҫӗ, кӗнекесем кӑлараҫҫӗ. Вӑл тӗлӗшрен епӗр ђавашсем ыттисенђен пит кайах йулман. Малалла тата пикенсерех ӗҫлемелле, илемлӗ ђаваш йуррине ҫул уҫмалла.

**Ҫ. Макҫимӑв.**

# ВУЛАКАНСЕМ МӖН КАЛАҪҪӖ.

## „ЙӖМӖР САККИ САРЛАКА“ пирки.

Наҭартарах йапаласене ҫынсем курмасӑрах иртеҫҫӗ, вӗсем ҫинђен ҫырма та тарашмаҫҫӗ. Аваннисене куҫ умӗнђен сӑмах ђӗнмесӗр ирттермеҫҫӗ, пурте вӗсем ҫинђен калаҫма тӑрашаҫҫӗ. Оҫҫиппаван „Йӗмӗр сакки сарлака“ йатла трама ҫинђен те ҫавӑн пекех; ретаксипе ун ҫинђен ҫырусем нумай килеҫҫӗ. Ҫыракансенђен хашӗ пйесса ҫинђен ҫыраҫҫӗ, хӑшӗ ана „Сунтала“ кӗртни ҫинђен.

Вут-хӗм йулташ „Йӗмӗр сакки сарлака“ ђаваш халахне мӗн шухашлаттарнине сӑнаса, ун шухашӗ ҫинђен „Сунтал“ вулакансене пӗлтересшӗн ҫапла ҫыраҭ:

„Кӗҫӗн-Йелђӗк йалӗнђе каниккула килнӗ студентсем 31-мӗш теккапӗрте „Йӗмӗр сакки сарлака“ йатла Опҫиппав пйессине лартма хатӗрленђӗҫ. Халахсем пилетсене 10 тенке ҫитиђђен илђӗҫ. Пйессӑра пирвай—хресђенсен выҫлахђенхи пурнӑҫне кӑтартна, унтан кайарах — хресђенсен выҫлах ҫулхи пурнӑҫне. Выҫлах ҫул пӗр хытна ҫакӑр татки те хакла тапи лайах паларса тараҭ, хађ пулсан ҫакӑр таткисем ахалех выртса ҫӳреҫҫӗ. Ку пйесса ҫавна аса илтерсе тирпейлӗхе, аван пуранма вӗрентет. Пйесса пит хурлахлипе, тата ҫак выҫлах ҫулхи хайсен пурнаҫне аса илнипе халахӑн вӗри куҫҫулӗ пӗрксӗрех ҫӗре такӑнаҭ. Спектакк̆алти халахсен куҫҫулӗ тӑканманни ҫукпа пӗрех. Ку пйесса пахсан пит аван, мухтамалла ана ман шутпа, тата К-Йелђӗк халахӗсем те пит мухтарӗҫ.“

Каларамӑр вӗт: Оҫҫиппав пйесси ҫинђен Вут-хӗм халаха сӑнаса кун пек ҫыраҭ. С. Леонтйев йулташ ун пек мар, вал хай шухашӗсене ҫыраҭ. Анђах ҫыраҭ те пӗр пек мар. Малтан:

„Ман шутпа ҫав «Сунталан» 12-мӗш нумӗрӗнђе Ох-н П. ҫырни пекех ку трама нумай уса парассӑн туйанмаст̆“, — тет. „Ку трамасӑр пуҫне урах лайах, йалта лартмалли пйессӑсем пулсан, кун пеккисене шурнала кӗртме кирлӗ мар“—тесе пӗтерет ҫырунее.

Варринђе хайех тата ҫапла ҫыраҭ:

„Анђах маншан уйлсан «Сунтала» кӗртни пӗрре те ђармаст̆. Лартма йавар пулсан та вулакансем пулӗҫ ҫапах. Епӗ хамах ана питӗ лайах инттересленсе вуларам. Ман пеккисем урах та нумай пуђтетӗп епӗ“, -- тет.

В. Маркковниккӑв йулташ „Йӗмӗр сакки сарлакана“ пахалаҭ, Оҫҫиппав пйессӑсем ҫырас тӗлӗшӗпе хайӗн хастарлӑхне кӑтартрӗ тет. Анђах вӑл та: — „Ман шутпа йавӑртарах пйесӑн пайӗсене Оҫҫиппав калана тарах кӑларса прахсан ана йалти стсена ҫинђе те лартма пулӗ“—тенӗ хыҫҫӑн, вӑл та ҫав пйессӑна «Сунтал» ҫине кӗртнӗшӗн кашт варҫаҭ. Вал ҫапла ҫыраҭ:

„Ђанахах та, литтераттура ҫулӗ ҫинђе ҫитменлӗхсӗм пулаҫҫех. Унсӑр пуҫне литтерттура та пулаймаст̆. Ҫакна пирӗн нихҫанта манса хаварса, тарук̆ах Оҫҫиппав йул. пек пысак трама ҫыракансене айаплаcа, вӗсен ӗҫӗсене хурламалла мар. Трамана лартна ђух йалти стсена ҫинђе тумалла мар теккоратсисем пулсан та Оҫҫиппав йулташ трамине хурласа усасар теме пултараймастпӑр. Оҫҫиппав пйессӑсем ҫырас тӗлӗшӗпе хайӗн хастарлӑхне кӑтартрӗ, Ҫаванпа та вал ђавашсен палла траматуркӗ пулса тараҭ. Вал „Йӗмӗр сакки сарлака“ йатла траман умӗнхи сӑмаххинђех—йавӑртарах, килӗшйен карттинсене (пайӗсене) кӑларса пӑрахма хайӗх хушаҭ. Ман шутпа ђанах та ҫапла тусан трамана йалти стсенасем ҫинђе те лартма пулӗ. Анђах епӗ Ох-нан хаш шухашӗсемпе килӗшетӗп. Ђанах та кун пек варам пйессӑсене уйахра пӗрре тухакан „Сунтал“ шурнал ҫине ҫапмасан та йурӗђђӗ. Кун пек каланипе, епӗ траматурксен ҫулне питӗрес тесе каламастӑп. Ун пек вӑртм пйессасене „Сунталра“ мар, кӗнеке ҫинђе ҫапса кӑларттарас, тетӗп. Кун пек тусан „Сунталра“ пирӗн ђеђекленекен ҫамрак литтераттӑрсем валли те вырӑн ытларах пулӗ. „Йӗмӗр сакки сарлака“ йатла трамана хурламалла мар, Оҫҫиппав йул. хай те хресђен ҫемйинђе ӳснӗ пирки, трама ҫинђе вал пӗтӗмпех йалти ђаваш хресђен пурнаҫӗпе, унӑн саванаҫӗсемпе ӗҫӗсене, сӑмахран каласан ђаваш сӑн сапатне, тӗплӗн кӑтартса, ҫутатса пана. Кун пек трамасем пире кирлех. Анђах „Сунталра“ йала йурахсӑр пйессӑсем ҫапӑннисенне шӑтакра пытанса ларса каламасӑр хаварма пултараймастпӑр. Ун пек пйессасенђен „Вӑрвари“ йатла пйессӑна та кӑтартма пулаҭ. Ҫаванпа та малалла „Сунтал“ ретаксии пйессӑсене ҫапна ђухне, пйесса йала мӗн ђул уса пама пултарнине малтанах шутласа илсе тин ҫапма тарашмалла. Йал халӗ пйессасрмшӗн ҫунаҭ. Иала валли кирлӗ, ана йурахла пйессӑсем парар!“

**В. Марковниккӑв.**

Ахванис Кусми тата ҫапла ҫыраҭ:

Трама йатне вуласанах ку трама мӗне пӗлтернине такам та шухӑшласах пӗлмелле. Вал ђаваш хресђене виҫӗ пусаран нумай пусса куҫна ҫӗрте пите пысӑк уса панине, ҫав ӗҫре ана пулӑшнине мал-

танхи пайне вуласанах тавçарса илмелле.—Çаванпа та Ох-н П. статйинҫи:—„ку трамаран пит пысăк уссийех çук пуҫ тетеп епĕ“,—тенĕ сăмахсем вырăнăçусар йапала, вăл сăмахсем хайсем усăсăррине пĕлтереççĕ. Ох-н П. трама йалсемшĕн мĕн йенҫен усăсăррине кăтартса парай. Вăл тӳрех:—„ана йалсенҫе лартас пулсан теккоратси пысăк, вăрман, Атăл, çаран кирлĕ“,-тет. Тĕлĕнмелле!.. Трамăсенҫен йе пйессăсенҫен тепĕр майпа та усă курма пулай вĕт. Трамана çиҫшерĕн-саккаршаран йе пĕтĕм халăхпа та пĕр çĕре пухăнса ларса, вулана хыççăн тĕплĕрех шухăшласан та—усси пулай, пулмаст темелле мар. П. Н. Оççиппавăн „Ĕмĕр сакки сарлака“ йатла 4 пайла 5 карттинлă трамă питĕ усăлла, ăна усăлла мар тесси çук.»

**Ахванис Куçми.**

Çапла ĕнтĕ пйессăна сăнакансем тĕрлĕ май çыраççĕ. Пурте вĕсем пйессăна пахалаççĕ, наҫар тийекенни пĕри те çук. Хăшĕ-пĕри «Сунтала» кĕртнĕшĕн вăрçаççĕ.

Ретакси хăй вăл пйесса „Сунтала“ кĕртнĕшĕн те хăйне айăпламаст. Сăнакан йулташсен:—«Вăл пйесса, Оççипăв йулташ кăтартна пайа каларса пăрахса та пулин йалти стсенă çинҫе лартма пулай пулĕ“—тенĕ сăмахсем—тĕрĕс сăмахсем. Ҫаваш литтераттуринҫе кăна мар, вырăс литтераттуринҫе те йалта лартма аван, çăмăл пйессăсем питĕ те сахал. Ҫаваш литтераттуринҫе, йалсемшĕн пур йенҫен те паха пйессăсем çукпа пĕрех. Йе вĕсенҫе теккоратси пысăк, йе выҫакан çынсем, пуринҫен ытла хĕрарăмсем нумай, йе ытла пысăк, йе илем сахал, йе тата ытти çитменлĕх. Çаванпа йалта ĕçлекенсем ыйтнă тăрăх «Сунтал» ретаксийĕн ирĕксĕрех те пулин вăл пйесса шурала кĕртмелле пулҫĕ.

Трпĕр йенҫен, пйесса вăл пăхма кăна мар, вулама та лайăххине манмалла мар. Паха пйессăсене йумахсем халапсем йарас вырăнне те халăха тăнлантарса пама тăрăшмалла.

## „САВНИ ПАРНИ“ пирки.

Каçал йанвар уйăхĕшĕн, тухнă шурнал «Сунталăн» 1 (31) мĕш нумĕрĕнҫе çамрăк поет Митта Ваçлейĕн «Савни парни» йатла поемă çапăнса тухнă. Ку поемăна витĕртерех сăнаса вуласа тухсассăн, ăна шурналта çапăнса тухакан поемăсенҫен самай палла поемă теме йурай, çавăнпа та ку поемăна çыракан ҫăвашсен çамрăк поеҫĕ Митта Ваçлейĕ çинҫен пĕр виç сăмах çырма лекет.

Митта Ваçлейĕ вăл хаҫ çамрăк, тин çырма вĕренет пулин те çав тĕрлĕ илемлĕ йухса тăракан çтихсем, поемăсем çырса, ҫаваш ҫĕлхи илемне, хутошĕствине кӳрет. Вăл хайĕн çтихĕсенҫе ку таранҫҫен ҫаваш хушшинҫе çĕтсе пураннă, никам асилсе тупайман сăмахсене кӳртсе, çтихăн ашҫикне ҫавашăн тĕп самахĕсемпе илемлентерет, çитĕнеймен кĕске сăмах пуплевсене вĕçлет, çитĕнтерет.

Ку ĕç пур çынна та шăл çемми мар, вăл пурне те пĕр пек паранмай, мĕншĕн тесен ăна, çыхăнтарма та питĕ çăмăлах мар. Çак майпах поемăна вуланă ҫух та, тинкererех, асăрхаса вуласан тин ăнланма пулай. Анҫах, мĕншĕн апла ҫас ăнланмалла мар çырма кирлĕши? Епĕр, пирĕн вĕренмелле тепĕр пулсан, вали-шали çырнисемпе вĕренме пултараймастпăр. Кирек йепле çын та, вĕреннĕ ҫух çынран пример илет, мĕнле çын хушшинҫе пуранай—çавăн майлă вĕренет. Çавăн пек пире те çынсенҫен пример илме лекет: çавăнпа унăн поемĕ, çтихĕ пирĕншĕн çырма вĕрентекен пример. Ку питĕ лапах йапала, епĕр куншăн Митта Ваçлейне тав тума тивĕçле, анҫах унăн «Савни парни» тейекен поемĕнҫе выран выранпа тăнланмалла мар сăмахсем кĕрсе кайнă. Тĕслĕхрен:

> Капланайса анҫĕ кĕрхи хăруш каç
> Ҫуптурĕ, илейрĕ варнă пыҫҫăка.
> Йамрасем кахаллăн пĕлĕте сăхаç
> Каçхи йур йурларĕ çăра пуç çака.

Малтанхи пуплев тăнланмалла. Иккĕмĕш: Ҫуптурĕ илейрĕ варнă пыҫҫăка. Мĕн сăмахши вăл варнă? Йе вараланнă тени пулайши? Вараланнă тени пулай пулсан, мĕнле пыҫҫăкха вăл вараланнăскер? Апла çулланнă çу та пурши? Тен Митта Ваçлейĕшĕн—вилекен вилнĕ çын та пури тен, пĕлме çук çав.

Тата мĕнлеха кĕрхи хăруш каç вараланнă пыҫҫăкпа ҫуптавай. Епĕ хĕрпе хусах ҫуптунине çех пĕлетĕм, кĕрхи хăрушă каçпа вараланнă пыҫҫăк ҫуптунине тăнланаймастăп. Тата тепĕр пример:

> Ей асамăç, йумăç—çилĕм ес кала:
> Пулайи çав манăн ҫăн çунан телей,
> Йе ман хастарланнă, çитĕннĕ хала
> Илейĕшим вилĕм—сив тутар пелей.

Кунта «сив тутар пелей» тем тени пулай. Те Митта Ваçлейĕсен пуранакан çĕрте вилĕм илсе çӳрекен, халахпа суйласа лартнă «сив тутар пелей» йатлă çын пур, те тата Митта Ваçлейĕ кунта иккĕмĕш пуплеври «телей» текен сăмахпа йулташлантарасшăн анҫах «пелей» сăмаха кӳртсе лартнă? Çапла ĕнте çакăн пек тăнланма хĕн сăмахсем ҫылайах кĕрсе кайнă. Ку ĕнтĕ çтихăн илемне кӳрет те, анҫах шухăшне çухатай.

Малашне поетсен çакăн пек тăнланма хĕн сăмахсене сахалатарах парса, йе унтах тăнлантарса хăварсан пире тĕттĕм ҫăвашсене аван пулĕҫҫĕ.

**В. Çаваç.**

## Шăхасанти шурнал.

Шăхасанти 2-мĕш сыпăкла шкулта вĕренекен аҫасем хăйсен вайĕпе „Вĕренекен сасси“ йатла çтена хаçаҫĕ каларaççĕ. «Вĕренекен сасси» çумĕнҫе шурнал «Çамрăк» тухса тăрай. Икĕ çул хушшинҫе 3 номĕр каларҫĕç. Кунтах тата выранти пурнаçа сăнакан крушок хăй вайĕпе тепĕр хут шурнал каларай. Ку крушок 1926-мĕш çул пуçламĕшĕнҫе ĕçлеме пуçлана.

Шурналсем литтераттура тĕлĕшпе питĕ аван. «Çамрăк» шурнал ак çак пайсене уйăралай: пирĕн пуранаç, политтĕкпе наукка пайĕ, турра ĕненменсен кĕтесси, йалхуçайствипе литтераттура пайĕ. Çак пайсене пурне те пекех сăва майлă çырнă, сайра хутран çех статйапа çырнă. Выранти пурнаçа сăнакансен шурналĕнҫе пĕтĕм выранти ҫаваш пурнаçне сăнаса çырнă статйасем, сăвасем тата ҫаваш йуррисем те пур.

Шурналсене вуласа пăхсан пур те шурналсене аван теççĕ, анҫах вăй çитеймен пирки вĕсене пĕрер екçемплер çех алăпа çырса хунă.

**„Йарим“**

# ÇАМРĂК ПИССАТТĔЛСЕМПЕ КОМСОМОЛ.

Партак кăмăл хуçăлни, киҫемлĕ шухăшсем тухкалани пирĕн Ҫăваш писсаттĕлĕсем хушшинҫе иртнĕ çуркунне кăштах сисĕнеҫҫĕ. Вăл тĕрлĕ условисенҫен килнĕ. Йулашки вăхăтра писсаттĕлсен хăйсен тĕп ĕçĕпе интересленни ытларах палăра пуçларĕ. Вĕсен ĕçлес кăмăлĕ те, çапăнакан просветенисем тăрăх, майĕпе çĕкленсе пынăн туйăнаҭ пире. Çапах та кунта ытти ĕç хушшинҫен васкаса ĕçлени, хăшĕпĕри просветенисене лайăх йакатасшăн тăрăшманни лайăхах палăраҭха. Анҫах пирĕн тĕп шухăш ун çинҫен мар.

Епĕр çамрăк писсаттĕлсем çинҫен, вĕсен пурнăçĕ, вĕсен литтературăллă ĕçĕ çинҫен çырасшăн. Çамрăк писсаттĕлсен пултаруллăхĕ çинҫен пирĕн хаçатсем те, «Сунтал» шурнал та ҫылай çыркаларĕç. Ку тĕлĕшпе «туман ҭыха пилĕкне хуçкалани» те пулкаларĕ пулас та, анҫах ун çинҫен çырасси те ку статйăн темине (тĕп шухăшне) кĕмест.

Ман умра «Çамрăк Хресҫен» 1 (54) №-рĕ выртаҭ. Хаçатăн «Çамрăксен пурнăçĕ» тенĕ пайра: «Уҫйанавскăри Ҫăваш Петтехникумĕ çумĕнҫи ПСÇЛКС йаҫҫейкки хăйĕн ҫленĕсене: Митта Ваçлейне... ирсĕр ĕçсем туса çӳренĕшĕн кăларса ывăтрĕ», тесе пĕлтерессĕ.

— Ну, вара мĕн каласшăн есĕ? Комсомол йатне хисепрĕн кăларакан ĕçсем тунă та комсомолран кăларнă, мĕн пур вара унта? — тейĕ вулакан малтанах çак йĕркесене вуласа пăхсан.

Ҫăнах та, вăл ĕç çинҫе уйрăм ҫарăнса тăмаллийех те çукҫĕ Митта Ваçлейĕ комсомол ретĕнҫен тухакан, майĕпе вĕренсе ураланса пыракан çамрăк писсаттĕл пулман пулсассăн. Анҫах Митта Ваçлейĕ — комсомол ретĕнҫен шăтса тухакан çамрăк писсаттĕл. Çавăнпа ăна комсомолран кăларса прахни çинҫен кăш та пулин шухăшласа пăхмаллах.

Мĕне пĕлтеретха вăл — Митта Ваçлейне комсомолран кăлармалла пулни? Вăл, пĕр йенҫен, Митта Ваçлейĕ хăй комсомолран сивĕннине, тепĕр йенҫен — комсомол ăна политтĕк тĕлĕшĕнҫен вĕрентсе çитĕнтерме пултарайманнине пĕлтерет.

Митта Ваçлейĕ пекки пĕрре çеç мар, ку тĕлĕшпе тата ыттисене те кăтартма пултаратпăр.

Акă, Хусанкайах илер. Хусанкай комсомолĕсҫĕ (тен хаҫ те комсомолĕс пуҫ, тĕплĕ пĕлместĕп), анҫах ăна комсомолĕс теме нийепле май та çукҫĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вăл йаҫҫейккă пухăвĕсене сайра, ăнсăртран пырса лекнĕ пек анҫах çӳреҫҫĕ. Тата хăйне те пур çĕрте те комсомолĕс пек тыткаламасҫҫĕ. Хусанкай комсомолра тăрса комсомолĕс пулманни мĕнрен килнĕ? Комсомол ун çине çавăрăнса пăхманнинҫен. Йаҫҫейккă ăна хăйĕн ĕçне хутшăнтарма тăрăшманнинҫен, ĕç паманнинҫен, пухусене çӳремесен те мĕншĕн пыманнине ыйтманнинҫен килнĕ.

Çавăнпа вара Хусанкай комсомолран, сотсиалисăм тăвас тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕçлекен орканисатсинҫен майĕпе уйăрăлса пырса Йĕççенин ытамне пырса лекет:

«Кирек мĕн кала, йултăшăм, кирек мĕн кала!

Ухмаха йеретĕп пулĕ Йĕççенинпала».

тесе çухăраҭ вăл хăйĕн «Алентейĕ» йатлă çапăнман сăввинҫе. Куна çеç мар, тата тĕттĕмрех сăвăсем те кăтартма пулаҭ Хусанкайăнне, анҫах хаҫ алăйĕнҫе ун сăввисем çук пирки ку та çитĕ.

Иккĕ сахал пек туйăнсан, виççĕмĕшне те илер. Виççĕмĕш вăл—хăйĕн сăввисенҫе, пуринҫен ытларах, пĕҫҫен вĕлтĕртетекен çамрăк поет Рсай. Рсай та комсомолĕс пулнă. Совпартшкулта та вĕреннĕ. Анҫах... (пĕтерет çав «анҫах») хаҫ вăл комсомолĕс мар. Комсомолран вăл çав Митта Ваçлейĕ пекех тухса ӳкнĕ.

Рсай йулташăн иртнĕ çулла, кĕркунне çырнă сăввисенҫе пессимисăм, киҫемлĕх туллийехҫҫĕ, хăшнепĕрне вилĕ тăпри шăрши çапса кайнăҫҫĕ. Хаҫ Рсай сăнсăпаҫĕ урăхланса пынă пек туйăнаҭ (ретакси çывăхнерех пыни партак килĕшрĕ пулмалла, атту аҫач шанҫăкĕ ҫистийех çухалнăҫҫĕ). Çапах та «урăхланнă» Рсай, ҫĕреренех урăхланни лайăх палăрмасҭха. Çапах та, Ваçанкка калашле, Рсай уйăх çине ҫас та ҫас хăпарма йуратаҭ; вăрмансем урлă мулкаҫсемпе тавлашса ҫупма йуратарах параҭ. Совет çĕршывĕнҫе сотсиалисăмлă хуçайствăпа уйрăм капиталислă хуçайствăсем тавлашса ҫупнине сăнама вĕрентес килет пирĕн Рсайсене. Йăла çĕнетекен вактĕвек ĕçсене, ĕмĕртен аҫапҫаран пуçласа ватти таранҫҫен çапата туса тĕттĕмре, пĕр хĕлхем çутă курмасăр пурăннă Ç и т м ĕ ш йалĕсем çĕнĕлле пурăнма пуçланине кураймасҭха Рсай. Пире пролеттарилле литтераттурăна çавă кирлĕ. Рсайăн «епĕ» ытла çийелте палăрса тăраҭ. Куна сăмах майĕ килнипе каласа хăварас терĕмĕр.

Çапла, çамрăк писсаттĕлсенҫен хăшĕпĕри хавшакланса пыни, çырма вĕренме пуçласанах тĕрĕс çул çинҫен парăнса пыни курăнаҭ. Кунта екконономиккăн çĕнĕ политтĕкĕн «илемĕсем» сĕртĕнни те пур. Унпа пирĕн кĕрешес пулаҭ. Ҫĕрене ыраттаракан йапала кунта. Малта асăннă поетсем пурте комсомол ретĕнҫе ӳссе, литтературă ĕçне ĕçлеме пуçласанах комсомолран сивĕнсе пыни. Ку сийенлĕ паллах ĕнтĕ. Çавăнпа çак ĕç çинҫен тĕплĕ шухăшласа, вăл сийенлĕхе пĕтермелли майсем тупмалла.

Митта Ваçлейĕ çинҫен те ăна комсомолран кăларнă хыççăн манса каймалла мар. Йаҫҫейккăн ăна йусама тăрăшмалла. Митта Ваçлейĕсем, Хусанкайсем комсомолшăн çухалнă çынсем пулмалла мар. Комсомолшăн вĕсем пĕтнĕ пулас пулсан, л и т т е р а т т у р ă ш ă н т е в ĕ с е м н у м а й ă х у с а л л ă ç ы н с е м п у л а с ç у к.

Çамрăк писсаттĕлсем çине ытларах çавăрăнса пăхни кирлĕ. Çамрăк писсаттĕлсене комсомолран сивĕнме парас пулмасҭ. Комсомолра тăракан çамрăк писсаттĕлсене йаҫҫейккă патнерех çывхартмалла. Çамрăк писсаттĕл комсомолран уйăрăлмалла мар, комсомолăн кулленхи ĕçне хутшăнса ĕçлесе пымалла, комсомол масси сывлакан сывлăшпа сывламалла, ун хаваслăхĕпе хавасланмалла, ун ĕç хастарлăхĕпе хастарланмалла; çапла пулсан анҫах епĕр хамăр çамрăк писсаттĕлсенҫен ĕçхалăх çамрăкĕсене кирлĕ просветенисем кĕтме пултаратпăр.

Çамрăк писсаттĕлсене пурнăç çине хура куçлăх витĕр пăхасран, вĕсен хăйсен кулленхи ĕçне, пурнăçне ĕç çамрăкĕсен, ҫи малтан комсомол массин ĕçĕпе, пурнăçĕпе çыхăнтарни анҫах çăлма пултараҭ.

Ҫăваш комсомолĕн çамрăк писсаттĕлсене хăйĕн ретĕнҫе политтĕке вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе вăйлатмалла.

Ҫăваш Пролеттари Писсаттĕлĕсен Союсĕн те хăйĕн ретĕнҫе тăракан çамрăк писсаттĕлсене (тăманнисене те куç умĕнҫен йамалла мар) пултаруллăхне сăнаса криттĕклес ĕçе лайăхлатмалла. Пире çамрăк писсаттĕлсене тĕрĕс çул çине тухма пулăшакан криттĕк кирлĕ.

Çамрăк писсаттĕлсем хушшинҫе палăракан пессимисăмпа, пурнăçа йуратманнипе — ҪППС-ĕн комсомолпа пĕрле мĕн вăй çитнĕ таран кĕрешес пулаҭ.

**Иссайĕв М.**

Йурлас марах тесеђђӗ,
Йысни ђеркки — çут ђеркке,
Çав çут ђеркке йурлатрӗ — теççӗ.
(Савкай — „Авăн сăри“ — Канаш 286 №. 14.XII. 26 ç.)

Ç. Шăпђăк, тата „Кӗрхи каç“ йатлă сăввинђе (Çамр. Хр. — 47 №-р, 14 XI.26.): — „Ӗçпе ывăннă йал вилнӗ пек çывраť“ — тет. Йал мар çывраť вӗт, йалти çынсем çывраççӗ. Вăл, çапах, „йал çывраť“ — тет

Мӗн тума çынсем кап1а хытланаççӗши? Мӗн тума вӗсем тата кунта, йапалана хăйсен йађӗпе ђӗнмеççӗ, ун вырăнне урăх йапала йатне хураççӗ? Куркари ђейе — курка, теççӗ; ђерккери ерехе — ђеркке, йалта пурăнан çынсене — йал, теççӗ.

Кунта меттонимисем çинђен малта каланă сăмахсем вырăна килсе тăраççӗ. Унта епӗр: йапаласем пӗрпӗринпе йаланах, йе ђас-ђасах тађă тăрсан, вӗсен йађӗсене çынсем улăштарма пултараççӗ, тепӗђђӗ. Кунта та çавах. Ђей ђас-ђасах куркара пулаť, ерех—ђерккере, çынсем — йалта. Çавăнпа писсатгӗлсем те, халăх та, вӗсен йађӗсене кирлӗ вăхăтра улăштарма пултараççӗ.

Акă Рсай йулташ та «Çыру» йатлă сăввинђе çапла çыраť:

Ђăваш ђӗлхи, суймасп, ђăнах йанрарӗ...
Йевроппă, Аçи итлерӗç ак ăна — тет.

Кунта Рсай: — „Йевроппăпа Аçире пурăнакан çынсем“ — тес вырăнне — „Йевроппăпа Аçи итлерӗç“, — тет. Çын йатне тӗнђе пайӗсен йађӗпе улăштараť.

Çавăн пекех епӗр те: — «Канаш» хаçата вулатпăр, — тес вырăнне, — «Канаша» (тӗрӗс ăнланас пулсан: çынсен канашлăвне) вулатпăр. «Сунтала» (тимрӗç лаççинђинеи?) çырăнса илес тетпӗр, «Ленин кӗнекине вулас» — тес вырăнне — «Ленина вулатпăр» — тетпӗр.

Ђăваш йуррисенђе аван меттонимисем тата та пур. Меттăнимисем çинђен калаçнă ђухне вӗсем патӗнђен ђарăнмасăр иртсе кайас килмест. Ак вӗсем:

Ирхине тăтăм тулпалан,
Ўсӗрӗлнӗ пек пултăм пылпалан...
(Н И. Ашмарин — Сборник чув. песен).

Пирӗн вăйă хăçан ђарăнаť?
Ђăн Хăйатра ђарăнаť.
(С. М Макçимăв — Ђăваш йуррисем).

Епӗр кайатпăр, ай, пулккипе,
Епӗр кайатпăр пулккипе —
Мул сапсан та ђарăнас çук.
(Çавăнтанах).

Кунти примерсенђен малтанхинђе: — Тул çутипе тăтăм — тес вырăнне — Тулпалан тăтăм, — тенӗ Иккӗмӗшӗнђе: — Ђăн Хăйатри йармăркка кунӗ ђарăнаť. — тес вырăнне: — Ђăн Хăйатра — тенӗ. Йулашкинђе укçа вырăнне мул тенӗ.

Укçа тенӗ сăмаха тата та улăштарма пулаť иккен. Сăмахран: ваттисем — „укçа ђул касаť“, — тенӗ. Укçа мар касаť ђула, ăна укçалла тытнă çын касаť. Тата: — ылттăн витӗр куççўлӗ йухаť, — тенӗ. Каллех ылттăн витӗр мар, аван пурнăç витӗр. аван пурăннă ђух та куççўлӗ йухаť. Анђах аван пурăнăçпа ылттăн тађă тăраççӗ. Çавăнпа „аван пурăнăç“. тес вырăнне, „ылттăн“ тенӗ.

Çăкăнта асăннă пур примерсенђе те уйăрса хунă мăшăрлă сăмахсем пӗр пӗринпе тађă тăраççи? Илемлӗ литтераттурăна çырма вӗренесех тийекенсем антăв вăл примерсене тепӗр хут вуласа, тађă тăнине сăнаса тухђăр.

Йулашкинђен тата пӗр сăмах: меттонимисем калаçăва кӗскетеççӗ, çырăва та кăштах çӗнӗ шăрш çаптараççӗ.

**Савнă Тус.**

# ХАЛĂХ ТВОРЂЂЕСТВИ.

## Ваттисен халапӗсем.

Куç харши кӗçӗтсен, çынтан вăтанасса, теççӗ.
Сулахай пит çамарти кӗçӗтсен, çупкă çиессе, теççӗ.
Сулахай халха шăхăрсан, усал хыпар илтессе, теççӗ.
Ура тупанӗ кӗçӗтсен, ташласса теççӗ.
Ываç тупанӗ кӗçӗтсен — укçа тупасса теççӗ.
Таракан пӗђиккӗ пулсан та сурахран йулмасť. теççӗ.
Панулми пулнă çул тырă пулмасť, теççӗ.
Çăхан киђ карти урлă краклатса каçса кайсан, аван пулмасť, теççӗ.
Ђакак пўрт тарне ларса ђриклетсен, кил хуçи çулталăкђен вилет, теççӗ.
Ђӗкеç иленсен, пуйасса теççӗ.
Умран кушак каçса кайсассăн, ӗмӗтленнӗ ӗмӗт çитеймест, теççӗ.
Кăмакаран кăвар сиксе ўкессӗн, хăна килессе теççӗ,
Çул урлă çуркалансан, çав çул вăрă тытанаť, теççӗ.
Пӗр кунлăха кайнă ђух, çиђӗ кунлăх çаккăр хатăрле, теççӗ.
Килти сăмаха кўрше каласа çўрекене, аван çын мар теççӗ.
Ахађ лариђђен кӗрӗк аркине те пулин йăвала, теççӗ.
Çўренӗ ђухне çын çине курак сыссан, вăл çын çав кун суран кураť, теççӗ.
Çынна мăшкăлађђен, малтан ху çинђен шухăшласа пăх, теççӗ.
Çӗрле камăн ђăххи малтан алтаť, çавăн пурнăç ăнаť, теççӗ.

**Петте.**

1. Хӗвел карталансан, тăм ўкет теççӗ.
2. Вут хӗрўллӗ (пӗçертсе) çунсан сивӗ пулаť, теççӗ.
3. Хур кайăксем айалтан вӗçсен, кӗр кӗске килет, теççӗ.
4. Шыв çинђе шапа патти çийеле хапарсан, çăмăр пулаť, теççӗ.
5. Тăвар шывлансан çăмăр пулаť, теççӗ.
6. Хӗвел йупалансан, сивӗ пулаť, теççӗ.
7. Хӗвел уралансан, çил тухаť, теççӗ.
8. Уйăх карталансан, тăман тухаť.
9. Автан çурт тарне улăхса алтсан, уйар пулаť, теççӗ.
10. Сывлăм ўкмесен, çăмăр пулмасť, теççӗ.
11. Ђӗлӗм тӗтӗмӗ пӗлӗтелле кайсан, çанталăк сивӗтет, теççӗ.
12. Йур тађка (нумай) çусан, тырă пулаť теççӗ.
13. Хӗлле çанталăк ăшă тăрсан, çулла шăрăх пулмасť, теççӗ.
14. Атăл пăрӗ вăйлă кайсан, çур тырри пулаť, теççӗ.
15. Шăна хӗл каçсан, тыр пулаť, теççӗ.
16. Мăрйерен (трупаран) тухакан тӗтӗм çӗре салансан, çанталăк ăшăтаť, теççӗ.
17. Çур вăрăм килсен, кӗр кӗске килет, теççӗ.
18. Çерçисем шыва кӗрсен, çанталăк çăмăрсăр тăраť, теççӗ.

**Йуханкка.**

1. Тырра хӗвел тухăçнелле вырсан, килес çул тырă аван пулаť, хăвел анăçнелле вырсан—нађар пулаť, теççӗ.
2. Пўртре каткă хунама пуçласан, çын пуйассине пӗлтерет, теççӗ.
3. Сысна улăм çӗклеме пуçласан, сивӗтессе, теççӗ.
4. Тӗлӗкре урапа курсан, сăмаха пӗлтерет, теççӗ.
5. Пушар тухнă çӗртрен мӗн те пулин киле илсе килсен, çав çын çунса кайаť, теççӗ.
6. Ђи малтан çăмăр сăмса çине ўксен, çын кахаллине пӗлтерет, теççӗ.
7. Тунти, Ытлари, Йун кунсенђе кӗпе-йӗм тăхăнсан, пыйтă йерет теççӗ.
8. Выђăха уйăх пӗтнӗ ђух пуссан, выђăх хунамасť, теççӗ.

**К. Пилеш.**

# ШАХМӐТ ПАЙӖ.

**Ретактӑрӗ Ҫ. М. МАКҪИМӐВ.**

(*Малалли*).

## 4. Роккировкка.

Короле тӑшманран авантарах сыхлас тесе, ӑна шаларах куҫараҫҫӗ, ҫавна роккировкка теҫҫӗ. Короҍпе тура вырӑнтан сикмен пулсан, вӗсем хушшинђе шашкӑсем пулмасан, короле шах паман пулсан, йе короҍ куҫна ђух шах тӗлне пулмасан, роккировкка тума йурат̆. Роккировкка икӗ тӗрлӗ пулат̆: кӗске роккировкка, тата вӑрӑм роккировкка.

Кӗске роккировкка: шуррисен К e1 куҫат̆, g1 ҫине, Т h1 куҫат̆ f 1 ҫине; хурисен: К e8 куҫат̆ g8 ҫине, Т h8 куҫат̆ f8 ҫине.

Вӑрӑм роккировкка: шуррисен—К e1 куҫат̆ c1 ҫине, Т a1 куҫат̆ d1 ҫине; хурисен: К e8 куҫат̆ c8 ҫине, Т a8 куҫат̆ d8 ҫине.

Роккировкка туни пӗрре ҫӳрени шутне кӗрет.

## 5. Шашкӑсен ваййӗсем.

Шашкӑсенђен ђи вайсӑррисем пешкӑсем, ђи вайли—ферӗҫ. Фикурӑсенђен лашапа слона ҫӑмӑл (вайсӑртарах) фикурӑсем теҫҫӗ, ферӗҫпе турана—йавӑр (вайларах) фикурӑсем теҫҫӗ.

Шашкӑсене танлаштарса пӑхсан, пешкӑ вайне 1-ре хурсан, тӗрлӗ шашкӑсен вайӗ ҫакӑн пек пулат̆:

| | | |
|---|---|---|
| пешкӑ | = | 1. |
| лаша, йе слон | = | 3. |
| тура | = | $4^1/_2$ |
| ферӗҫ | = | 9. |

Кунтан ак мӗн курӑнат̆: 1) ҫӑмӑл фикурӑна (лашана, йе слона) 3 пешкӑшӑн пама йурат̆; 2) лашапа слон вайӗ пӗр пек; 3) икӗ ҫӑмӑл фикурӑ пӗр тураран вайларах; турана пӗр ҫӑмӑл фикурӑшӑн, тата икӗ пешкӑшӗн пама йурат̆; 4) ферӗҫе икӗ турашӑн пама йурат̆ (икӗ турана ферӗҫрен вайлараха хураҫҫӗ).

Шашкӑсене илнӗ-пана ђух ҫак шашкӑсен вайне танлаштарнине астумалла.

## 6. Ҫырнӑ ђух тӑвакан паллӑсем.

Выђанине ҫырнӑ ђух ҫак паллӑсем кирлӗ пулаҫҫӗ:

| | | |
|---|---|---|
| + | = | шах! |
| ++ | = | ик йенђен шах! |
| × | = | мат. |
| 0—0 | = | кӗске роккировкка. |
| 0—0—0 | = | вӑрӑм роккировкка. |
| : | = | ҫийет (ҫапат̆). |
| ! йе !! | = | пит аван ҫӳренине кӑтартат̆. |
| ? йе ?? | = | нађар ҫӳренине кӑтартат̆. |
| $\frac{+}{-}$ | = | шуррисем ҫӗнтереҫҫӗ. |
| $\frac{-}{+}$ | = | хурисем ҫӗнтереҫҫӗ. |
| $\pm$ | = | шуррисем выђани авантарах. |
| $\mp$ | = | хурисем выђани авантарах. |
| = | = | выђав пӗр пек пырат̆. |
| ∽ | = | кирек йепле те ҫӳренине кӑтартат̆. |

Шашкӑсем мӗнле ҫӳренине, илме пултарнине, шах тунине астуса илме ҫак ӳкерђӗкре кӑтартнӑ поҫитсине тӗплӗ сӑнаса пӑхмалла.

Шуррисен 10 шашкӑ, хурисен 8 шашкӑ. Вӗсем хӑш-хӑш уйсем ҫинђе тӑраҫҫӗ?

Шуррисен шашкисем ҫак уйсем ҫинђе тӑраҫҫӗ: К g1; Т e5, С c3, С d3, Л c1, пешкӑсем: a3, b4, c2, g3, h2.

Хурисен шашкисем ҫак уйсем ҫинђе тӑраҫҫӗ: Кg 7, Ф b7, Т h4, Л f4, пешкӑсем: a5, a7, d5, e6.



Ы й т у с е м:

1) Шуррисем хурисенне хӑш-хӑш шашкӑсене илме пултараҫҫӗ?

2) Хурисем шурисенне хӑш-шаш шашкӑсене илме пултараҫҫӗ?

3) Шуррисем мӗнле ҫӳресе шах тума пултараҫҫӗ?

4) Шуррисем мӗнле ҫӳресе икӗ йенлӗ шах тума пултараҫҫӗ?

5) Хурисем мӗнле ҫӳресе шах тума пултараҫҫӗ?

О т в е т с е м:

1) b4 пешкӑ a5 пешка илме пултарат̆; g3 пешкӑ йе f4 лашана, йе h4 турана илме пултарат̆; e5 тура йе e6 пешкӑна, йе d5 пешкана илме пултарат̆.

2) a5 пешкӑ b4 пешка илме пултарат̆; ҫав b4 пешка тата ферӗҫ та b7 илме пултарат̆; 4f лаша d3 слона, h4 тура h2 пешка илме пултараҫҫӗ.

3) Шуррисем ҫапла шах тума пултараҫҫӗ: e5 турана илсе урӑх ҫӗре лартсан (e4, e3, e2, e1, f5, h5, йе: e6, d5) хура c3 слонран короле шах пулат̆.

4) Тура e5 g5 уй ҫине куҫсан, короле икӗ йенђен шах пулат̆, тура g5 йенђен те, слон c3 йенђен те.

5) Хурисем ҫапла шах тума пултараҫҫӗ: Фb7—b6+; Л f4—e2+; Л f4—h3+.

## 7. Шахмӑт ваййин правӗлӗсем.

Ђи малтан кам хӑш шашкӑсемпе (шуррипе-хурипе) выђамаллине шӑпа тытса, йе ахаљ сӑмахпа татаҫҫӗ.

Вайӑа шуррисем пуҫлаҫҫӗ.

Выђакансем пӗрин хыҫҫӑн тепри пӗр шашкӑпа пӗрре ҫӳреҫҫӗ (пӗр хот тӑваҫҫӗ).

Ҫӳренӗ шашкӑна калла илме йурамаст̆. Шашкӑсене алпа тӗкӗнме те йурамаст̆, тӗкӗнсен — хӑвӑн шашку пулсан, унпа ҫӳремелле, тепӗр йенӗн шашки пулсан— илмелле.